Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУН 18 ШĂМАТКУН
138 (4951) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци. секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Пролетари литературине пуçласа йаракан

Пирĕн тапхăрти аслăран та аслă писатĕл Алексей Максимăвич Горький вилни пайан икĕ çул тултарчĕ. Фашисла бандитсем генилĕ çынна чаплă пурнăçне татса пăрахрĕç.

В. М. Молăтăв йулташ Хĕрлĕ плошчĕтре каланă сăмахра А. М. Горькин вырăс тата тĕнче литературинчи ролĕпе вырăнне пахаласа çапла каланă: „Вырăс литературине пана влийани вăйĕ тĕлĕшпе Горький—Пушкин, Гогăл, Толстой пек гигантсем хыçĕнче тăрать, вăл вĕсен аслă традицийĕсене пирĕн вăхăтра чи лайăх малала туса пыракан çын. Горькин илемлĕ сăмахĕ пирĕн революцин кун-çулне влийани пани пирĕн кирек йепле урăх писателĕн пек мар, тÿрĕрех те вăйлăрах. Çавăнпа та Горький пирĕн çĕршыври пролетарилĕ, социалисăмлă литературăна чăн-чăн пуçарса йараканни пулса тăрать, çавăн пекех вăл пĕтĕм тĕнчери ĕççынниcен куçĕ умĕнче те".

Пирĕн çĕршыва çĕнетсе вăйлатнă çĕрте А. М. Горькин ролĕ калама çук пысăк. Хăйĕн çутă пурнăçĕн йулашки кунне çитиччене вăл совет литературине йертсе пыраканăн тата коммунисăм çĕнтерессишĕн пĕр пăркаланмасăр кĕрешекенĕн çапăçула вырăнĕнче тăнă.

Хăйĕн кĕнекисенче Горький вырăс халăхĕ тата Российăри ытти халăхсем талантсемпе мĕн тери пуйаннине кăтартса панă. Горький чăваш халăхĕн пурнăçне те Сойузри ытти халăхсен пурнăçне пĕлнĕ пекех пĕлнĕ, унăн çитĕнĕвĕсене, çĕнтерĕвĕсене асăрхаса тăнă.

Горький хăйĕн ытарайми паха çĕршывне пĕлнĕ, йуратнă ăна вăл. Вăл сарлака çеçенхирсем çинчен, илемлĕ те аслă йуханшывсем çинчен, паха тинĕс çинчен çырнă... Çав тĕлĕнмеле лайăх çутçанталăк йăлтах ирĕклĕ ĕçлĕ халăх аллинче пулас вăхăт çинчен ĕмĕтленнĕ вăл. Вăл хăйĕн ĕмĕчĕсенче çăткăн Майакинсен влаçĕнчен çăлса кăларнă Атăла курнă („Фома Гордейĕв"),—çак ĕмĕт пурнăçа кĕрсен тата пирĕн тăван çĕршывăн сарлака талкăшĕсенче ирĕклĕ, социалисăмлă ĕç чечекленсен вăл вĕçĕмсĕр хĕпĕртенĕ.

Горький ĕçе пĕлнĕ, йуратнă ăна вăл. Вăл хăйĕн ĕçĕнче—илемлĕ литературăра—чĕрĕ вăйпа хавхаланнă ĕçчен çын пулнă. Кунта та вăл капиталисăмлă катăргăна, пуринчен те ытларах—литературăри капиталисăмлă пăсăка хăй куçĕпе курнă свидетĕл пулнă. Тÿрĕ литературăшăн, халăх вăйĕн çыракан сăмахшăн Горький пĕтĕм пурнăç тăршшĕпе кĕрешнĕ, тата пролетарилĕ, социалисăмлă литературăна пуçласа йараканĕ пулнă май, вăл сăмахри мĕн пур торгашсене, фокусниксемпе шарлатансене чĕререн курайман, вĕсене хирĕç хайаррăн кĕрешнĕ.

Вăл совет литературине йертсе пыраканĕ пулнă. Унăн калама çук пысăк художĕствăлă авторитечĕ тата моралĕ-политикăлă тасалăхĕ литературăна йут етемсенчен сыхласа тăнă. Хăйне хăй çирĕп тыткалакан Горький писателсене сăмах çине йуратса пăхма вĕрентнĕ.

Горький совет писателĕсене çĕнĕ совет пурнăçне сывăхарах пырса пăхма вĕрентнĕ. Вăл Иосиф Сталин йертсе пыракан çĕршывра пурăнма та ĕçлеме те савăнăçлă тесе вĕрентнĕ.

Горький хăйĕн пĕтĕм ĕçне,—художĕствă ĕçне те, публицистикă ĕçне те,—болшевикла идейăлăхпа туса пынă. Болшевикла идейăлăх Горькине Ленинпа Сталин тусĕ тунă.

Рабочи класăн тата Совет Сойузĕн тăшманĕсене Горький революцилĕ хастарлăхпа сивленĕ. Тĕнче вăрçин провокатăрĕсене тата фашисăм вăрă-хурахĕсене тăрă шыв çине кăларни Горькине пĕтĕм тĕнчери малта пыракан демократин çулпуçĕ тунă. Унăн çулăмлă сăмахĕсем мĕлйуншар ĕççыннисене вăратнă тата фашисла сволăча тарăхтарса шартлантарнă. Горькине вĕлерсе, фашисла сволăч совет çĕршывне йăвăррăн çапма тăрăшнă.

Хальĕ ĕнтĕ, „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕ хыççăн, епĕр Горькине Совет Сойузĕн тата пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн чи хайар тăшманĕсем ирсĕррĕн вĕлернине пĕлетпĕр. Фашисла государствăсен штабĕсенче тĕлĕнмеле усал преступлени тума шутласа хунă. Вăл преступленине фашисла шпион тата провокатăр Троцкий тÿррĕмĕнех хушнă тăрăх тата шпионла бандăн пуçлăхĕсем—Бухарин, Рыкăв, Йагода решенийĕ тăрăх организациленĕ.

Горький чăн-чăн халăх ывăлĕ пулнă, вăл болшевиксен партишĕн, партин Сталинла Тĕп Комитечĕшĕн тата Совет правительствишĕн чунган чĕререн тăрăшнă. Фашисла бандитсем Горькине çавăншăн вĕлернĕ те ĕнтĕ. Горькине вĕсем—вăл Сталин йулташăн чи çывăх тусĕ пулнăшăн вĕлернĕ. Горький фашисăма хăйĕн çулăмлă чунĕнчен тапса тухакан мĕн пур хайарлăхĕпе курайман, çавăншăн вĕлернĕ ĕнтĕ Горькине халăхăн хайар тăшмансем—троцкиссемпе бухаринцăсем.

Вăл хăй те тăшмана лайăх пĕлсе тăнă, тăшмана хирĕç хайаррăн кĕрешнĕ. Вăл ĕçхалăхĕн пур йышши тăшманĕсене,—фашисăма хирĕç хайаррăн кĕрешме чĕннĕ.

— Тăшман парăнмасть пулсан, ăна пĕтерессĕ,—тенĕ вăл хăйĕн вилĕмсĕр сăмахĕнче.

Çак сăмахсене совет халăхĕ асра тытса тăрать, пур йышши тăшмансене те хăйĕн çулĕ çинче çĕмĕрсе пырать.

А. М. Горький çулăмлă пролетарилĕ революционер, социалисăм строительствин калама çук паллă руководителĕ пулнă.

Горький капиталисăмла общĕствă пусмăрĕнче, тĕксĕм подвалсенче, шалти килкартисенче пурăнакан çынсен пурнăçĕ çинчен чăннине каласа етемлĕхе чĕтретнĕ.

Анчах шăпах çакăнта ĕнтĕ, асаплантарнисемпе кÿрентернисем хушшинче, хĕн-хурпа хуйхă-суйхă хушшинче Горький ĕтеме аслă йуратупа йуратасси тата етемлĕх тĕнчи експлоатацин тискĕр кайăк тĕнчине çĕнтерессине ĕненесси çуралса тухнă. Российăри рабочи класпа пĕрле Горький марксисăм-ленинисăм патне пырса çитнĕ. Литературăра хăйĕн чапĕн тÿпинче Горький хăйĕн пурнăçне йаланлăхах рабочи клас партийĕпе, Ленин—Сталин партийĕпе çыхăнтарнă.

Хăйĕн генийĕн мĕн пур хăватне Горький пролетарилĕ, социалисăмлă революцишĕн кĕрешнĕ çĕре панă.

Епĕр Горький вилнĕшĕн хытă куланатпăр. Совет литературине тата тĕнче литературине тунă суран хал те чĕрех-ха. Анчах епĕр ытарайми паха пархатарлă аслă писателе тата ытларах йуратапăр. Унăн сăмахĕ пирĕн хушăра пурăнать, кĕрешĕве чĕнет, вĕрентет.

Халхи вăхăтра, суйлав кампани кунĕсенче, пирĕн çĕршыври халăхсем хăйсем утса тухнă историлĕ çула çаварăнса пăхаççĕ. Вĕсем совет халăхне çĕнтерÿ тума пулăшнă чи лайăх çынсен йачĕсене йуратса асăнаççĕ.

Вырăс халăхĕн мухтавлă ывăлĕсем нумай, унăн мухтавлă йатсем нумай. Анчах Горький йачĕ уйрăмах йуратмала, çывăх, хаклă йат.

Йуратнă Горькине вĕлернĕшĕн совет халăхĕ нихăçан та каçарас çук. Троцкисла-бухаринла шпионсене епĕр Алексей Максимăвич пуçĕшĕн хытă тавăрăпăр.

Вата çынсен телейлĕ пурнăçĕ

Пирĕн çĕршыври ĕççынниcене ватăлсан канлĕ пурнăçпа пурăнма у ловисем туса панă. Краматорскра ватлăх пирки паракан государствă пособине 121 çын илсе тăраççĕ. Металлурги савăтĕнче ĕçленĕ газовщик Кукçин йулташ уйăхсерен 267 тенкĕшер илет,—вăл революцичченхи вăхатра ĕçлесе илнинчен виçĕ хут нумайтарах. Пенçионер Воробйов йулташ уйăха 235 тенкĕ илет. Воробйов йулташăн пĕр ывăлĕ—професcăр, тепри врач пулса ĕçлеççĕ.

Хуласенче пурăнакан пенçионерсем Украинă СС Республикин Верховнăй Совет суйлавĕсене хатĕрленес çĕрте активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ.

(ТАСС).

Столицăри Молăтăвски суйлав округĕнче

Мускаври Молăтăвски суйлав округĕнчи суйлав участкисенче сасăламали çуртсене илемлетес ĕç пырать. Округри суйлав комиççин решенийĕ тăрăх, пур участкăсенче те сасăламали пулĕмсене ийунĕн 23-мĕшĕнчен кайа йулмасăр туса хатĕрлемеле.

Мускавран урăх вырăна тухса кайакан суйлавçăсене „сасăлама права паракан удостоверенисем" параççĕ. Суйлавçăсене лайăх пултăр тесе, çав удостоверенисене районсенчи советсем кăна мар, тата" участкăсенче те параççĕ. Суйлавçăсен спискисене тĕрĕслесе тухаççĕ ĕнтĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

■■ Крымри колхозниксем çĕрулмине Лысенко академик метăчĕпе лартма тытăнаççĕ. Кăçалхи çул унăн метăчĕпе виçĕ пин гектар ытла лартмала—вăл иртнĕ çулхинчен ултă хут ытларах пулать. Вăрлăхлăх хăвармали участкăсене 1.200 гектар хатĕрленĕ.

■■ Калинин хули тĕлĕнчĕ Атăл урлă тимĕр кĕпер хываççĕ, халĕ çав кĕперĕн пройектне туса хатĕрленĕ. Мускав—Атăл каналĕ çинче çÿрекен пысăк пăрахутсем кĕпер айĕпе туса çÿренĕ чух варрипчи пролота çĕклеме кĕпере тăвата башнĕлĕ тăваççĕ. Кĕперĕн сарлакăшĕ—19,6 метр, тăршшĕ—186 метр пулмала.

■■ Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăт коллективĕ, пĕтĕм халăх праçникне—РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсене хатĕрленсе,—производствăлă çĕнĕ çĕнтерÿ тунă. Ийунĕн 16-мĕшĕнче „ЗИС-101" йышши çăмăл автомобилсем 3 пин штук туса кăларнă.

■■ Рыбинскра çитĕннисене вĕрентмели вăтам шкул улттăмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Унта хулари предприйатисенчи рабочисемпе работницăсем 280 çын вĕр неççĕ Иртнĕ çулта шкултан 18 çын вĕрентсе кăларнă. Халхи вăхăтра вĕсем пурте аслă шкулсенче вĕренеççĕ. Кăçалхи çул производствăран пĕр уйăрăлмасăр ĕçлесе вĕренекенсем 28 çын вĕренсе тухнă. Вĕренсе тухнисенчен чылайĕшĕсем институтсене вĕренме кайаççĕ.

(ТАСС).

Д. А. Андрейĕв йулташ суйлавçăсем патĕнче

ТУРХАН. Майăн 15-мĕшĕнче Шурутри Молăтăв йачĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсен тата ĕççынни йединоличниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртнĕ. Суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа Д. А. Андрейĕв йулташпа тĕл пулчĕç. Пухура 140 çын ытла пулчĕ. Д. А. Андрейĕв, Широкин, Бахмисăв тата ытти йулташсем те тухса каларĕç.

Андрейĕв йулташ сăмахĕнчен

Есĕр мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртнă. Ман çине çапла пысăк шанăç хунăшăн чĕререн тав тăватăп. Есĕр мана шанни вăл коммунисла партине, партин Тĕп Комитетне тата Сталин йулташа шанни пулать. Мана Ленин—Сталин партийĕ пăхса ÿстернĕ. Епĕ коммунисла партин ывăлĕ,—халăх ĕçĕшĕн, социалисăм ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме сăмах паратăп. Манăн хамăн уйрăм интерес çук, епĕ халăх интересĕшĕн, социалисăм интересĕшĕн чĕререн тарăшса ĕçлетĕп. Социалисăм ĕçне малала йарасишĕн малашне татах та хĕрÿлĕн ĕçлесе, есĕр ман çине хунă пысăк шанăçа пурнăçа кĕртĕп.

Хамăран ÿсемсемшĕн епĕр Сталин йулташа тав тăватпăр. Пирĕн халăх çулпуçне Сталин йулташа тата унăн çывăх соратникĕсене йуратать, çавăнпа епĕр вĕсене Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрăмăр.

Чăваш ĕçхалăхĕ çак иртнĕ 20 çул хушшинче тĕлĕнмеле ÿсĕмсем турĕ. Елĕк пулсан епĕр çĕр çул хушшинче те кун пек ÿсĕмсем тăвайăастăмăрччĕ.

Халĕ епĕр пысăк праçнике—РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленетпĕр. Çак праçнике епĕр пурйенне те пысăк ÿсĕмсем тунипе кĕтсе илме тивĕçлĕ.

Есĕр ман çине хунă пысăк шанăçа тата темиçе хут лайăх ĕçлесе ответлеп, тесе шантаратăп. (Алă çупаççĕ).

Сывă пултăр коммуниссен парти тата пирĕн йуратнă çулпуç Сталин! (Алă çупаççĕ).

В. Т. Бахмисăв учителĕ сăмахĕнчен

Епĕр иртнĕ çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕнче—ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă чухне—хамăрăн телейлĕ пурнăçшăн кĕрешекенсемшĕн сасăларăмăр.

Пирĕн чăваш халăхĕн пурнăçĕ куллен-кун лайăхланса пырать. Пирĕн ачасен пурнăçĕ телейлĕ те савăнăçлă. Вĕсем совет шкулĕнче вĕренеççĕ. Епĕр суйласа йанă депутатсем халăхсен пурнăçне тата ытларах лайăхлатса пырĕç. Епĕ пĕтĕм суйлавçăсене ийунĕн 26-мĕшĕнче суйлав участкине пырса Острйаковпа Андрейĕв йулташсемшĕн сасăлама чĕнетĕп. Вĕсем пирĕн шанăçа тивĕçлĕ кандидатсем.

![portrait]

Вырăссен аслă писателĕ АЛЕКÇЕЙ МАКÇИМĂВИЧ ГОРЬКИЙ

Вăл вилнĕренпе икĕ çул тулчĕ. Ăна „сылтăмла-троцкисла блокри" фашисла бандитсем тискеррĕн вĕлернĕ.

Тĕнче литературин М. Горький йачĕпе тăракан институтĕнче

Горький литературăра 40 çул ĕçленĕ йатпа, ултă çула йахăн ĕлĕкрех Мускавра уçăлнă Макçим Горький йачĕпе тăракан литературă институчĕ тĕнче тата чи малтан вырăс литературине вĕренсе пыракан пысăк аслăлăхпа тĕпчев центрĕ пулса тăчĕ. Институт пролетарисен аслă писателĕ Горький пурнăçĕпе пултарулăхне вĕренесси çине тимлĕн пăхса ĕçлет. Тĕнчери мĕн пур халăхсен чĕлхисемпе тухнă кĕнекесене халех 250 пин тома çитерни институтăн библиотекинче йатарласа уçнă М. Горький пултарулăхĕн кабинечĕ пур. Унта ССР Сойузĕнчи халăхсен чĕлхисемпе тухнă аслă писателĕн произведенисене пĕтĕмпех пухса пыраççĕ.

Институт çумĕнче организациленĕ архив Алексей Максимăвичран йулнă шутсăр нумай алçырăвĕсене пĕтĕмпех пухса пĕтерес ĕçе вĕçлесе çитерет. Халĕ 62 пин алçырăвĕсене, Горький çинчен калакан документсене, жандармсем çырса тунă „ĕçсене" 62 пин пухнă.

Институт „А. М. Горький пурнăçĕпе пултарулăхĕн летописне" йĕркелесе тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем сарса йарать.

Институт çумĕнче уçăлнă А. М. Горький музейĕ ытти литературăпа политикă музейĕсенчен халăха чи çывăхи пулса тăрать. Вăл пит йĕркелĕн илемлетнĕ çуртра вырнаçнă. Унăн вунпĕр аслă пÿлĕмĕсенче аслă писателĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен кăтартса паракан експонатсем виçĕ пине йахăн шутланаççĕ. Музей уçăлнăранпа иртнĕ çичĕ уйăх çурă хушшинче, унта пырса куракансен шучĕ 85 пин çынна йахăна çитнĕ.

(ТАСС).

ПСК(б)П Ленинград облăç комитечĕн пленумĕ

Ийунĕн 16-мĕшĕнче ПСК(б)П Ленинград облăç комитечĕн пленумĕ пулса иртнĕ.

ПСК(б)П Ленинград облăç комитечĕн пĕрремĕш çекретарне А. А. Жданăв йулташа суйланă, иккĕмĕш çекретарне—Т. Ф. Штыкăв йулташа тата виççĕмĕш çекретарне—Н. В. Соловйов йулташа суйланă.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенче

Ийунĕн 15-мĕшĕнче, хулари учрежденисемпе унта пурăнакан халăхсене урăх вырăна куçарнă хыççăн тата порт сооруженисене йурăхсăра кăларнă хыççăн, республикă командованийĕ Кастелон хулинчен (Левантă фрончĕ, Ватаçĕр тинĕс çыранĕ) урăх вырăна тухса кайма вахăт, тесе йышăннă.

Йулашки кунсенчи çапăçусем питех те йăвăр условисенче пулса пынă пулин те,—республикă çарĕсем оборонă пултарулăхне чакарман.

Миахă генерал Левантă фронтĕнче вăрçакан республикă çарĕсем патне телеграммă йанă, çав телеграммăра вăл бойецсемпе командирсене Гитлĕрпа Муссолини бандисене хирĕç татах та хыттăн тăрса çапăçма чĕнсе каланă. „Тăшман пирĕн çине пысăк вăйсемпе атакăлать,—тесе çырнă Миахă,—анчах кĕрешÿ мĕн чухлĕ йăвăртарах, есĕр республикă территорине çавăн чухлĕ çирĕппĕн те хыттăн хÿтлеме тивĕçлĕ".

(ТАСС).

Республикă çарĕн геройĕ, 19 çулхи лотчик Хосе Морин. Вăл сывлăшра фашиссен самолочĕсене хирĕç çапăçура нумай хут пулнă. (Сойузфото).

Испанири пăлхавçăсен лагерĕнчи восстани

ПАРИЖ, ийунĕн 15-мĕш. (ТАСС). Андалузи районĕсенче (Испани), пăлхавçăсем тытса илнĕ вырăнсенче, нумайах пулмасть граждăнла гвардисен темиçе çар чаçĕсемпе отрйачĕсенче восстани пулса иртнĕ. Пăлхавçăсен влаçĕсем восстание путарса лартма çарсем илсе пынă. Çакăн хыççăн пĕр-перинпе хыттăнах çапăçнă. Карателнăй чаçсене пысăк сухатусем кÿнĕ. Восстание хайаррăн путарса лартнă. Йут çĕршыв интервенчĕсене хирĕç тунă восстанире пулнă офицерсене пурне те персе вĕлернĕ.

(ТАСС).

Германири фашисăма хирĕçле йухăм

ПРАГА, ийунĕн 16-мĕш. (ТАСС). Германире Чехословаки халăхĕпе, фашисла агреççи хăрушлăхне хирĕç кĕрешекен халăхпа пĕр шухăшлисен йухăмĕ ÿссех пырать.

Берлинри металлурги предприйатисенчи рабочисен ушкăнĕ нумайах пулмасть Чехословакири Судет-Нимĕç облăçĕнче пурăнакан нимĕçсем патне воззвани йанă. Çак кунсенчех тата Берлинри машинăсем тăвакан савăтсенчи рабочисен ушкăнĕ Чехословакин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Кафте патне çыру йанă. Рабочисем çапла çыраççĕ: „Есĕр Берлинран елеклесе çырнă черетлĕ нотă вырăнне лăпкă пурнăçшăн çунакан рабочисен çырăвне илсен, тен, тĕлĕнĕр. Епĕр сирĕн правителствă лăпкă пурнăçа сыхласа усрас тата Чехословакине никам пырса тĕкĕнмелĕхне хÿтлес тĕлĕшпе майăн 21-мĕшĕнче туса иртерне ĕçсене саламлатпăр. Гитлĕрăн суйса каланисене ăн ĕненĕр, епĕр те, Германи рабочисем, вăл каланине ĕненместпĕр. Епĕр лăпкă пурнăçшăн тăратпăр. Епĕр—Гитлĕра хирĕç, çавăнпа та епĕр сирĕншĕн тăратпăр".

Чехославакири муниципалитетсен суйлавĕсем умĕн—ийунĕн 12-мĕшĕнче Германири пытанса ĕçлекен профсойуз активĕсен ушкăнĕ Чехословакири профсойузсем патне çыру йанă, унта рабочисене пролетарилĕ пĕрлĕх фронтне тума чĕнсе каланă.

Чехословакири Либерце хулинчи пухусенчен пĕринче Берлин хулинчи пĕр рабочи хăйĕн тусĕ—Чехословаки рабочийĕ патне йанă çырăва вуласа панă.

Вăл çапла çырнă: „Йуратнă тусăм! Генлейнăвĕцсем: Чехословакине Германи çумне пĕрлештерсен сирĕн пурнăç лайăх пулать, сирĕн пурнăç ирĕклĕ тата телейлĕ пулать,—тесе çиреплетеççĕ. Ан ĕненĕр çав йумахсене! Гитлĕр пурăнна чухне пирĕн нимĕнле ирĕк те, телей те тата лайăх пурнăç та пулман, пулас та çук. Гитлĕр влаçа хăй аллине иличчен манăн ĕç укçинчен катса илекен укçа-тенкĕ 12 процент шутланнă, халĕ—25 процент катса илеççĕ. Çимĕççен хакĕсем пысăккăн ÿсрĕç. Çу тавраш ĕсене епĕр çийейместпĕр те. Çакăн пек ĕнтĕ пурнăç. Фашисăм вăл—чуралăх, выçлăх, вăрçă иккенне халĕ ĕнтĕ епĕр туйса илтĕмĕр. Кĕрешĕр фашисăма хирĕç. Лăпкă пурнăçшăн, ирĕклĕхшĕн тăрăр!"

Ийунĕн 26-мĕшĕ—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕ

Хамăр сасăсене тăван çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн парар!

Дмитрий Андрейевич АНДРЕЙЕВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Аслă Арапуç суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Ийунĕн 26-мĕшĕнче ĕççыннисем социализмăшăн, рабочи класăн диктатурине тĕреклетесшĕн кĕрешсе хăйнăн, хăмăр социализмăн çăршывĕ, аслă Ленин—Сталин партине пĕтĕм вăйне-хавалне парса ĕçлесе пыракан чи лайăх çыннисемшĕн сасăлаççĕ.

Çавăн пек çыннисенчен пĕрине—Дмитрий Андрейевич Андрейев йулташа Аслă Арапуçри крахмал-паткă савăтĕнчи рабочисем, инженерла-техникла работниксемпе служащисем тата Турхан районĕнчи „Хĕрлĕ Именеă" колхозрине Молăтăв йачĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне Аслă Арапуç округĕнчен депутата суйлама кандидата тăратнă.

Дмитрий Андрейевич Йетĕрне районĕнчи Вармаксас Асламас йалĕнче, хресчен çемйинче 1905 çулта çуралнă.

1918—1925 çулсем—Дмитрий Андрейевич вĕренме çулсем пулаççĕ. Малтан вăл хăйсен йалĕнчи кĕçĕн шкулта, унтан Йетĕрне хулинче вĕренет. 1925 çулта облаçри совпартшкула вĕренме кĕрсе, 1927 çулта вĕренсе тухат. Йулашкинчен Горький хулинчи коммунисла аслă шкулта вĕренет.

1926 çулта совпартшкулра вăл Пĕтĕм Союзри Коммунисчен (большевиксен) Парти ретне кĕрет.

Андрейев йулташ партийлĕ пропагандă ĕçĕнче пысăк опыт илнĕ. Совпартшкултан вĕренсе тухнă хыççăн, Андрейев й-ш пропагандис пулса ĕçлет. Коммунисла аслă шкултан вĕренсе тухнă хыççăн йна партин тата ответлăрах ĕçе парат.

Малтан вăл ПСК(б)П Обкомĕн органăй инструктăрĕнче ĕçлет. 1932 çулхи декабĕртен пуçласа—ПСК(б)П Варнар райкомĕн органпуçлахĕ тата райком секретарĕн заместительĕ пулса ĕçлет. 1935 çулхи февральтен пуçласа Андрейев й-ш ПСК(б)П Варнар райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ, 1937 çулхи апрельтен пуçласа ПСК(б)П Турхан райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçлет.

Суйлавçă йулташсем! Коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕшĕн сасăлăр!

Ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте суйлава пырса, халăхăн тÿре чĕрĕлĕ ывăлĕн — Дмитрий Андрейевич Андрейевăн йатне çырнă бÿллетенсене суйлав йашĕкне йарăр!

ЙЕВДОКИЙА ДМИТРИЙĔВНА ДМИТРИЙĔВА—ПСК(б)П Трак райкомĕн инструктăрĕ — Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Албахтинă суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

ВЛАДИМИР МИХАЙЛĂВИЧ НЕМЦĔВ—Йелчĕкри туллимар вăтам шкулдиректăрĕ—Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йелчĕк суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

АННА МИХАЙЛĂВНА МИХАЙЛĂВА—Пушкин йачĕпе тăракан колхоз председателĕ — Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тойçи суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат. (Патăрйел р.).

БОРИС ИЛЛАРИОНĂВИЧ ЙЕНИÇЕЙĔВ—Шăхасан МТС директăрĕ—Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Анатри Кипĕч суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

ПЕТР ЙЕФРЕМĂВИЧ ЙЕФРЕМĂВ — „Йанмурзино" колхоз председателĕ — Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Карай суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

Йевгени Иванăвич ОДИНЦОВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Наратчакни суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Й. И. Одинцов йулташ 1901 çулта Кĕнер йалĕнче (Куславкка р-нĕ), вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Тăванĕсем 1931 çултанпа колхозра тăраççĕ.

Й. И. Одинцов йулташ 1919 çулхи октябĕрте Хусанти университет рабфакне вĕренме кĕрет. 1920 çулта йна Хĕрлĕ Çара илеççĕ. Хĕрлĕ Çартан таврăнсан 1924 çулта Чăваш рабфакне вĕренме кĕрет. 1927 çулта вĕренсе тухса Ленинградри финанспа економикă институтне кĕрет. Институтра вĕреннĕ вăхăтра Борович округĕнче йалхуçалăхне коллективизацилес ĕçре пулнă йанăшсене тÿрлетес тĕлĕшпе 3 уйăх ытларах ĕçлет. Чăваш красноармейцăсем хушшинче икĕ çул агитаципе пропагандă ĕçне туса пынă.

1931 çулта институтран вĕренсе тухса, Чăваш АСС Республĕкне килнĕ. 1934 çулччен ОКК-РХИ-че ĕçленĕ. 1934 çултан пуçласа 1938 çулхи ийунĕн 13 мĕшчен ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн советпа суту-илÿ пайĕн инструктăрĕ пулса ĕçленĕ. 1938 çулхи ийунĕн 13-мĕшĕнчен Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком президиумĕ йышăнна тăрăх Йевгений Иванăвич Одинцов йулташа Чăваш АССР Апат çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссарне лартнă.

Й. И. Одинцов йулташ 1925 çултанпа ПСК(б)П ретĕнче тăрат.

Л. Д. Острйаков, Ф. С. Сафиуллин тата А. Ç. Толстов йулташсем суйлавçăсем патĕнче

ШĂНКАРТАМ (хамăр корр.) Ийунĕн 14-мĕшĕнче Кзыл Чишмари суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура 341 çын пулчĕç. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăнкăртам суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат Ф. С. Сафиуллин йулташ тата РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Патăрйел суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат Л. Д. Острйаков йулташ пухура тухса каларĕç.

Ф. С. Сафиуллин йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! Есĕр мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратса, ман çине пысăк шанăç хуваăшăн сире пысăк спаçипа калатăп. Сирĕн шанăçа тивĕçлипе пурнăçласа пыма пулатăп. Хамăр тăван çĕршыва татах та çирĕплетсе, татах та вăйлатса пырассишĕн хамăн пĕтĕм вăйа, пĕлĕве, пултарулăха парса ĕçлеме пулатăп.

Ĕлĕк епĕр питĕ чухăн пурнăçпа пуранна. Çав çити-çитми пурнăçа пула ача чухнех ĕçлеме тухса кайрăм. 1921 çултан пуçласа 1934 çула çитиччен пĕрмайăх тĕрлĕ производствăсенче ĕçлесе пурăнтăм. 1930 çулта, Донбассра ĕçленĕ чухне, ПСК(б)П кандидатне тата 1931 çулта члена кĕтĕм. Çак вăхăтран пуçласа вара парти, совет, профсойуз организацисенче хĕрÿлĕн ĕçлеме тытăнтăм. Епĕ рабочисем хушшинче пĕлÿ илтĕм, рабочисем хушшинче ÿсрĕм. Мана совет правителствипе тата Ленин — Сталин партийĕ çын турĕç.

Халĕ епĕр телейлĕ те культурăлă пурнăçпа пурăнатпăр. Çак пурнăçа епĕр аслă Октябĕр революцинче коммуниссен партийĕ йертсе пынипе çĕнсе илнĕ. Епĕ партин ывăлĕ пулса, малашне те хамăн пĕтĕм вăйпа Ленин—Сталин парти çулйĕрĕшĕн кĕрешсе пыма пулатăп.

* * *

Шăнкăртам суйлав округне кĕрекен 9 суйлав участкинче суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕсем пулса иртнĕ. Пухусенче Л. Д. Острйаковпа Ф. С. Сафиуллин йулташсем хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулнă. Округри суйлав комиççи председателĕ Куçмин йулташ пирĕн корреспондентпа калаçнă чухне çапла пĕлтерчĕ:

— Суйлав умĕнхи пухусем пысăк организацилĕхпе, питĕ çĕкленÿлĕн иртеççĕ. Суйлавçăсем пухусене хĕрлĕ йалавсемпе тата коммунисла парти çулпуçĕсен сăнĕсемпе пухăнаççĕ. Ийунĕн 14-мĕшĕнче пулнă пухусенче: Тутар Тимешĕнче—152 çын, Сăрйелĕнче—236 çын, Кзыл Чишмара—341 çын тата Çĕнĕ Пикшикре — 145 çын пулчĕç. Суйлав умĕнхи пухусене хĕрарăмсем те, ватă стариксемпе карчăксем те — пурте хастарлăн пухăнаççĕ, активлăн тухса калаçаççĕ. Пур йалсем те праçник тумĕпе тумланчĕç. Суйлавçăсем суйлав кунне—ийунĕн 26-мĕшне пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ.

* *

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Ийунĕн 12-мĕшĕнче, ирхине 10 сехетре, Кив Атикасси йалĕнчи суйлавçăсем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатпа—Алексей Çергейĕвич Толстов йулташпа тĕл пулчĕç. Толстов йулташпа тĕл пулнă йатпа 250 çынлă митинг пулса иртрĕ. Митингра Толстов йулташ хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Толстов йулташ сăмахĕнчен

— Йулташсем! Ĕлĕкхи вăхăтра епĕр суйланма та, суйлама та пултарайман. Старшина суйланă чухне суйлавра йал пуйанĕсем, вăрман хуçисем, çĕр тара илсе аккансем анчах пулнă. Вĕсем суйланă та, суйланнă та. Халĕ пачах урăхла. Акă есĕр мăн çине, чухăн çын ачи пулнă çын çине, çав тери пысăк шанăç хутăр, аслă ĕç тума хушрăр. Епĕ есĕр хушнă ĕçсене, пысăк савăнăçпа, ответлăха çирĕп туйнипе туса пырăп. Есĕр мана шанни вăл—Ленин—Сталин партине шанни пулат. Епĕ ĕçхалăхĕн ывăлĕ, Ленин—Сталин партийĕн ывăлĕ. Хамăн ĕçе йаланах Сталин йулташ вĕрентнĕ пек туса пыма тăрăшатăп. Халăх тăшманĕсемпе, кулаксемпе пĕр хăрамасăр, çине тăрса кĕрешсе пытăм. Малашне те халăх тăшманĕсемпе мĕн пур хайарлăхпа кĕрешсе пыма, Ленин—Сталин партишĕн чĕререн тăрса ĕçлеме пулатăп.

Штанаш суйлав округĕнчи суйлавçăсем мана ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртнă. Пысăк шанăç хунă, ответлă ĕç хунă. Епĕ есĕр хунă шанăça хамăн пĕтĕм вăйа, пĕлĕве хурса пурнăçлатăп, тесе сире шантаратăп. Алла-алăн тытăнса ĕçлер, пурте пуйан та культурăлă пурăнакансем пулар! Сталин йулташ кăтартăвĕсене пурнăçлар!

Сыва пултăр коммуниссен партийĕ тата пирĕн çулпуçĕ Сталин йулташ!

Паваркасси йалĕнче пулнă митингра

Хĕвел анас умĕн, халăх ĕçрен пушансан, çывăхри кÿршĕ йалсенчен арçынĕ-хĕрарăмĕ, ватти-вĕтти —пурте Паваркасси йалне (Çĕрпÿ р) пухăнма пуçларĕç. Кунта пайан ийунĕн 10-мĕшĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленесси çинчен митинг пулат, унтан „Ленин в Октябре" йатлă кино кăтартаççĕ.

Акă халăх пухăнса çитрĕ: пĕтĕмпе 1500 çын пуçтарăннă.

Митинг уçалат. Паваркассинчи туллимар вăтам шкул директăрĕ—доверённай П. Петров йулташ çитес суйлавсенче коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнет, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Çĕрпÿ суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат З. А. Андрейевăпа ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Чурачăк суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат Николай Иванăвич Йежов йулташсен биографийĕсене каласа парат.

Йулашкинчен пĕтĕм халăх йуратакан сăслă фильм—„Ленин в Октябре" кăтартма пуçлаççĕ.

Кино халăха çав тери кăмăла карĕ. Колхозниксем тăван Илйича екран çинче курса савăнчĕç.

И. Давыдăв.

Суйлава пысăк хаваслăхпа кĕтсе илетпĕр

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Шăнкăртам суйлав округне 11 суйлав участки кĕрет. Вĕсенче 4533 суйлавçă.

Епĕр участкăсенчи суйлав комиççисене куллевхи ĕçре пулăшса пыратпăр. Пур суйлав участкисене те суйлав докуменчĕсене—бÿллетенсене, конвертсене çитерсе панă. Суйлавçăсем историлĕ куна—ийунĕн 26-мĕшне калама çук пысăк хаваслăхпа, пур ĕççенче те çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Хальхи вăхăтра суйлав участкисемпе суйлавçăсен çурчĕсене илемлетеççĕ, суйлавçăсен çурчĕсем çумне лозунгсем, портретсем çыпăçтарса хунă.

Суйлав кампанийĕ пынă май ĕççыннисен политикăлă активлăхĕпе производствăлă пултарулăхĕ вăйлăн ÿсрĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Патирек суйлав участкине палăртма кирлĕ. Кунта пурĕ 192 суйлавçă. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали суйлав Положенисемпе Сталинла Конституцине вĕренме пурĕ 11 кружок организациленĕ. Вăл кружоксем кăтартулă ĕçлесе пычĕç. Кашни суйлавçă аллинчех ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положени пур. Суйлав участки çумĕнче 11 номĕр стена хаçачĕ кăларнă. Хаçатсене Ильйасăв йулташ йĕркелĕ кăларса тăрат. Политикăлă агитаци ĕçне вăйлă туса пынă май, Патирекри „Сталь" колхоз производствă ĕçĕнче те пысăк çитĕнÿ турĕ. Укçа-тенкĕ пухас плана пур тÿлевсем йенĕпе те тултарнă. Государствăна аш-какай тăрас çулталăкри плана 85 процент, сĕт тăратас плана 96 процент тултарнă. Çуртыррисем çинчен çумкурăксене пĕр хут çумласа пĕтернĕ. Колхозниксем кăçалхи вăйлă тырпулшăн хĕрÿлĕн кĕрешеççĕ. Суйлав кунне—ийунĕн 26-мĕшне пур ĕçре те çитĕнÿ тунипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ.

Большевикла агитаци ĕçĕнче хĕрÿлĕ агитатăрсем ÿссе пыраççĕ. Хальхи вăхăтра Ильйасăв, Скворцов, Хамдейĕв агитатăрсем агитаци ĕçне тĕплĕн туса пыраççĕ.

Суйлав кампани пынă вăхăтра çамрăксем кăна мар, ватă стариксенчен те лайăх агитатăрсем палăрчĕç. Патирекри 61 çулхи колхозник Миназетдин Хафисăв йулташ йалти чи лайăх агитатăр. Пухусенче активлăн тухса калаçат, суйлавçăсене суйлав Положенийĕ çинчен ăнланмалла каласа парат. Йалти суйлавçăсене пурне те, суйлав Положенине вĕренме хутшăнтарнă.

— Ĕлĕк епĕр пĕр татăк çăкăршăн вăйа пĕтерсе пуранна, пĕр татăк çăкăршăн Саматăв кулаксем патĕнче тата муллăсем патĕнче ĕçлесе пуранна. Халĕ епĕр пĕтĕмпех хамăршăн ĕçлетпĕр. Пирĕн лозунг: „Кам ĕçлет—вăл çийет, кам ĕçлемест—вăл çимест". Ĕлĕк пирĕн нихăçан та çиме çитмен, кулаксен 300—400 пăт тырă пулнă. Халĕ пирĕн колхозниксем 300—400 пăт тата унтан ытларах та тырă илеççĕ. Пирĕн ачасем совет шкулĕсенче вĕренсе пĕлÿ илеççĕ. Çаксене пире пĕтĕмпех коммунисла парти тата Сталин йулташ туса панă,—тет Миназетдин Хафисăв йулташ.

Пирĕн округра чĕререн тăрăшса ĕçлекен агитатăрсем тата нумай. Халĕ вĕсем уйрăмах Патăрйел суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Л. Д. Острйаков, Шăнкăртам округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне суйлама тăратнă кандидат Сафиуллин йулташсем çинчен вăйлăн агитацилеççĕ.

Суйлав кампани пынă вăхăтра рйадовой колхозниксенчен ÿснĕ лайăх агитатăрсем татах та пур. Гайнулла Хамидуллин (Кзыл Чышма), Сахаудин Валишĕв (Суринск), Еседулла Идрисăв (Патирек), доверённай Зианша Махмутăв (Палтийел) йулташсене уйрăмăнах палăртатпăр. Вĕсем колхозри ватă çынсем, колхозниксем хушшинче пысăк авторитетпа усă кураççĕ. Махмутăв доверённай ийунĕн 12 мĕшĕнче ватă колхозниксене—35 çынна—пухса кандидатсем çинчен ăнлантарса пачĕ. Пирĕн кун пек паха тĕслĕхсем нумай.

10 суйлав участкинче радио пур. Колхозниксем пĕр çĕре пухăнса радио итлеççĕ. Патирекре кашни суйлавçă киле хаçат çыранса илет. Хаçат-журнал çыранса илекенсен шучĕ суйлав кампани вăхăтĕнче чылай ÿсрĕ.

Колхозниксемпе ĕççыни йединоличниксен политикăлă тата производствăлă активлăхĕ ÿссе пыни пире çитес суйлава йĕркелĕн ирттерме май парат. Епĕр суйлав округне кĕрекен пур суйлавçăсем те ийунĕн 26-мĕшĕнче суйлав участкисене пырса, хăйсен сассисене коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн парасса шанатпăр. Пирĕн суйлавçăсем хăйсен граждăнла пысăк тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртме хатĕр тăраççĕ.

Шăнкăртам округĕнчи суйлав комиççи председателĕ М. А. Куçмин

Телейлĕ пурнăçпа мухтанса савăнат

Кçени Ашмаринă 55 çулхи суйлавçă, Шупашкар хулинче Урицки урамĕнче пурăнат. Вăл РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕр. Революциччен Кçени Ашмаринă хут пĕлмен. Совет влаçĕ пулсан тин вулама, çырма вĕреннĕ. Халĕ вăл хаçатсем çеç мар, илемлĕ литературă та вулат.

Кçени Ашмаринă й-ш хăйĕн хальхи телейлĕ пурнăçĕпе мухтанат, савăнат. Нимĕнрен ытла ачисемпе çине пăхса хавасланат. Мĕншĕн тесен, унăн ачисем совет ĕмĕрĕнче кăна çĕршывăн чаплă çыннисем пулма тивĕçлĕ пулчĕç. Унăн çичĕ ача.

Аслă ывăлĕ—Петĕр 33 çулта. Вăл Мускаври Тимирйазĕв йачĕпе тăракан йалхуçалăх академинчен вĕренсе тухнă. Халĕ Хусанти селекци станцинче аслăлăх работникĕ пулса ĕçлет. Борис—строителинженер. Виктăр—28 çулта. Вăл Ленинградри çар академинчен вĕренсе тухса тухтăр йатне илнĕ, халĕ Хĕрлĕ Çарта. Унтан кĕçĕнни —Коçтă авиаци техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Халĕ авиаци техникĕ пулса ĕçлет. Кĕçĕннисем:—Верă Шупашкарти педрабфакра (виççĕмĕш курсра), Натă—вăтам шкулта, Лÿççă—вăтам шкулта вĕренеççĕ.

Кçени Ашмаринă хăй те общественăлă ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлет. Вăл хăйсем пурăнакан Урицки урамĕнчи коммуналлă çуртăн комендант помошникĕ. Тасалăхшăн тăрăшса ĕçлет. Халĕ вăл Шупашкар хулинчи 11-мĕш суйлав участкине кĕрекен суйлавçă-килхуçи хĕрарăмсенчен йĕркеленĕ хор кружокĕнче тăрат.

Ашмаринă Кçени РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕр. Вăл ийунĕн 26-мĕшĕнче хăйсен участкине кĕрекен пур суйлавçăсенчен те маларах алла бÿллетенсем илсе, Шупашкар суйлав округĕнчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă П. И. Калинкинă йулташшăн, Шупашкар хула 2-мĕш суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă В. М. Молăтăв йулташшăн сасăласшăн.

Арк. Нестĕрăв.

Хĕрÿлĕн хатĕрленетпĕр

ШĂХАСАН. Пирĕн Вăрман-Йенĕш йалсоветĕнче 467 суйлавçă. Вĕсенчен хĕрарăмсем—271, кăçал пĕрремĕш хут суйлава хутшăнакансем—8 çамрăк.

РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсемпе суйлав саккунĕсене епĕр, йалсовет членĕсем, малтан хамăр вĕрентĕмĕр. Йалсовет членĕсем пирĕн 15 çын, вĕсенчен 9-шĕ халĕ агитатăрсем, доверённайсем пулса ĕçлеççĕ. Епĕ хам та участкăри суйлав комиççинче ĕçлетĕп. Епĕр йалсоветри пĕтĕм суйлавçăсене Конституципе суйлав саккунĕсене вĕрентес ĕçе хутшăнтарнă. Ачалă хĕрарăмсем, ватă стариксемпе карчăксем патне агитатăрсем киле кайса вĕрентеççĕ.

Агитацилĕ-массăлă ĕçе анлăн сарса йани массăна политикăлă-хуçалăхлă задачăсем тавра мобилизацилеме пулăшат. Çапла епĕр йалсоветра агитацилĕ-массăлă ĕçе вăйлатнă хыççăн государствă умĕнчи обйазателствăсене тултарас ĕçре пысăк çитĕнÿ турăмăр. Халĕ 1938 çулшăн аш-какай парас çулталăк планне 51 процент пурнăçлана, çăм пухас плана 100 процент тултарнă. Çавăн пекех сĕт-çу тăратас плана та ăнăçлăн пурнăçласа пыратпăр. Укçа-тенкĕ йенĕпе илен культсбор, йалхуçалăх налогĕ, страховкă укçисене пĕтĕмпех пухса пĕтернĕ.

Çураки вăхăтĕнче уйра ĕçлекенсем хушшинче политикăлă-агитацилĕ ĕçе анлăн сарса йатăмăр, çавна пула колхозниксен производствăлă хастăрлăхĕ нумай ÿсрĕ. Куллен кун çĕнĕрен стаханăвĕцсем ÿссе пычĕç, вĕсем лайăх ĕçлени суракине вăхăтра, ăнăçлăн вĕçлеме май пачĕ.

Хальхи вăхăтра йалсоветри колхозсем хирти тырпула пухса кĕме хатĕрленсе пыраççĕ. Тыра вырмали машинăсене йусаса пĕтерчĕç.

Çакăн пекех суйлав участкин çуртне плакатсемпе, портретсемпе илемлетрĕмĕр. Кунта суйлавçăссене сасăлама 6 кабинă туса хатĕрлерĕмĕр. Суйлав кунĕнче ватă суйлавçăсене, ачалă хĕрарăмсене суйлав çуртне илсе пыма колхозсем йатарласа лайăх лашасем уйăрчĕç.

Пирĕн йалсовет РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе Канаш округне, Чăваш республикĕн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе Йамаш округне кĕрет. Канаш округĕнчи суйлавçăсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Канашри вакунсем йусакан савăтри паллă стаханăвкăна Антонăва йулташа, Йамаш округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Уйкас Кипек йалсовечĕн председателне Иванов йулташа палăртрĕç.

Пирĕн Вăрман Йенĕш йалсоветĕнчи суйлавçăсем суйлава 100 проценчĕпех хутшăнĕç, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн—Антонăвăпа Иванов йулташсемшĕн хаваслансах сасăлĕç.

Вăрман Йенĕш йалсовет председателĕ Д. Титов.

Ĕçе лайăх йĕркеленĕ

ВАРНАР. Агитацине пропагандă ĕçĕн тĕп вырăне халĕ ентĕ суйлав участкисенче пулмалла. Агитацире пур формăсемпе те усă курмалла: каласусем, вулавсем, пухусем т. ыт. те.

Суйлав участкисем умĕнче тăракан çак задачăна Услапа суйлав участки тивĕçлипе йăланса илнĕ. Кунта суйлав участкин çуртне илемлетнĕ. Унта РСФСР, ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисем тата Конституцисем пур. Суйлавçăсен спискине тата тĕрĕс çырса курăнмалла вырăна çакнă.

Суйлав участкинчех справка сĕтелĕ организациленĕ. Кунта кашни кун темиçе суйлавçă пырса хăйсем пĕлмен ыйтусене тĕплĕн ыйтса пĕлеççĕ.

Участкри суйлавçăсене суйлав Положенисене тата Сталинла Конституцине вĕрентес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Кашни бригадăра тата колхозсемпе хуралçăсем хушшинче уйрăм кружоксем ĕçлеççĕ. Çапла 5 кружокра 250 суйлавçăна вĕренĕве хутшăнтарнă. Кружоксене çÿремен суйлавçăсене киле кайса вĕрентеççĕ.

Çулахи касçенче колхозниксемпе колхозницăсем урамсене тухса ларасçĕ. Кунта агитатăрсем суйлав çинчен те калаçаççĕ. Кунсăр пуçне çамрăксемпе икĕ хутчен ыйтусемпе ответсен вечĕрĕ туса иртернĕ.

Суйлавçăсем суйлав ăçта тата мĕнле кун пуласçине лайăх пĕлеççĕ. Весем: ийунĕн 26-мăшĕнче епĕр çĕршывăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн—РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Дубов йулташшăн, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Виноградова йулташшăн хамăр сасăсене паратпăр, теççĕ.

Ст. Улангай.

Алексей Максимӑвич Горькине асӑнса

„ГОРЬКИЙ—аслӑ халӑхӑн аслӑ ывӑлӗ“ (В. М. МОЛӐТӐВ)

Совет халӑхӗн мухтавӗ

(А. М. Горький вилни икӗ çул тулнӑ тӗле)



А. М. ГОРЬКИЙ
(1900 çулсенче)

* * *

Икӗ çул кайала, 1936 çулхи йюнӗн 18-мӗшӗнче вырӑссен аслӑ писателӗ, етемлӗх телейӗшӗн паттӑрӑн та хӗрӳлӗн кӗрешнӗ Алексей Максимӑвич Горький вилсе карӗ.

Троцкисла-бухаринла çынвӗлерекенсен фашисла ирсӗр банди революцин хӗрӳлӗ йыхравçин ытарма çук паха кунçулне татрӗ.

„Ленин вилнӗ хыççӑн, Горький вилни пирӗн çӗршывшӑн тата пӗтӗм етемлӗхшӗн калама çук йывӑр çухату пулса тӑрать“,—терӗ Молӑтӑв йулташ генилӗ писателе асӑнса каланӑ сӑмахӗнче.

Горький йывӑр пурнӑçа тӳссе иртернӗ. Вӑл çутçанталӑк хайарлӑхне те, выçлӑха та, мӑшкӑлланине те, хӗсӗрленине те тӳснӗ. Патша правительстви, пурнӑç çинчен тӗрӗс шухӑшлама тӑракансене, малта пыракансене, политикӑ тӗлӗшӗнчен активлӑ çынсене, йунпа пусмӑрлӑх тытӑмне хирӗç, буржуазипе помещиксен нумай ӗмӗр хушши пыракан пусмӑрлӑхне хирӗç кӗрешекенсене хӗсӗрлесе, хыçран йӗрлесе çӳренӗ пекех, Горькине те канлӗ пурӑнса ӗçлеме май паман. Горький мӗн çамрӑкранах хӑйӗн произведенийӗсемпе, хӑйӗн пӗтӗм пурнӑçӗпе хӑйне çуратнӑ халӑхпа çыхӑннӑ.

Горький хӑйӗн произведенийӗсенче ӗççынни çӑнлӑхӗсене, çын телейӗшӗн паттӑрӑн кӗрешекенӗн сӑнлӑхӗсене мухтаса йурланӑ. „Старуха Изергиль“ йумахри Данко, тӑвӑл хыпарçи, унтан тата „Мать“ повӗçри Павел Власӑвпа вата Нилӑвнӑ тата ытти пролетарисене, револьуционерсене кӑтартса паракан паха сӑнлӑхсем пӗтӗм совет халӑхне паллӑ.

Аслӑ пролетарилӗ писатель хӑйӗн статйисемпе художествӑлӑ произведенийӗсенче халӑх тӑшманӗсене, революци тӑшманӗсене пӗтӗм чунтан тарӑхса питленӗ. Вӑл иртнӗ пурнӑçӑн çынӗсене, тискер кайӑкла çынсене халиччен нихӑçан пулман ӑсталӑхпа сӑнласа кӑтартнӑ. Хӑйӗн нумай романӗсенчен пӗринче—„Жизнь Клима Самгина“ романра Горький — капиталисӑм тарçин, икӗ питлӗ çынӑн тата ултавçӑн сӑнарне кӑтартнӑ. Çав ирсӗр çынсен сӑн-сӑпатӗнче халӗхи вӑхӑтри фашисӑм йыттисен тата çӗршыва сутакансен сӑн-сӑпатне палласа илме пулать.

Горький тӑшмана лайӑх пӗлсе тӑнӑ, ӑна хытӑ çӗмӗрнӗ. Тӑшмансем те Горький вӗсемшӗн пит хӑрушӑ пулнине ӑнланнӑ.

Патша правительстви хӑй вӑхӑтӗнче Горькине хирӗç вилӗмле кӗрешме пуçланӑ. Ӑна, ӳпке чирӗпе чирлӗскерне, полици йурийӗх унӑн чирне тата та ваййлатма пултаракан вырӑна хӑваласа йама тапаçланнӑ. Горькин ӗçӗ охранниксене çав тери шиклентернӗ, вӗсем ун хыççӑн йӗрлесе çӳренипе, ссылкӑна йанипе тата тӗрмене хупнипе лӑпланман, 1903 çулта Алексей Максимӑвича вӗлерме тӑнӑ. Мускаври Горький йачӗпе уçнӑ музейра çӗçӗпе чикнӗ паллӑлӑ портсигар упранать. Çав портсигар халӑхӑн аслӑ писателӗн пурнӑçне вӗлерме тапӑннӑ черносотенецӑн çӗççинчен упраса хӑварнӑ. Октябӗрти социалисӑмла аслӑ революци çӗнтернӗ хыççӑн Горькин пултарулӑхӗ нихӑçанхинчен те ытларах ӳсме пуçланӑ. Анчах унӑн пурнӑçӗн ӗçӗ литературӑ кӑна пулман, Горькин литературӑпа политикӑлӑ ӗçӗ пӗр-пӗринпе тачӑ çыхӑнса пынӑ. Октябӗрти революци хыççӑн Горький социалисӑмла обществӑ тӑвассишӗн активлӑ кӗрешекенсенчен пӗри, социалисӑмлӑ культура тӑвассине йертсе пыраканӗсенчен пӗрийӗ пулса тӑрать.

ССР Союзӗн сыхлӑхӗшӗн, мирлӗ саманана сыхлассишӗн хӑйӗн сасне парса, советсен çӗршывӗ çинчен контрреволюционерсем, тӗрлӗрен фашиссем сарнӑ елеке тӑрӑшыв çине кӑларса, Горький йут çӗршывсенчи интеллигенцин лайӑх представителӗсене нумайӗшне пирӗн çӗршывӑн чӑнлӑхне ӑнлансе илме, унӑн тусӗсен ретне тӑма пулашнӑ. Горький тӗнчери фашисӑма хирӗçле йухӑма йертсе пыракансенчен пӗри, миршӗн кӗрешекен пысӑк бойецсенчен пӗри пулнӑ.

Социалисӑмӑн ирсӗр тӑшманӗсен, халӑх тӑшманӗсен çилли Горький çине капланса пынӑ. Вӗсем ӑна вӗлернӗ. Вӗсем ӑна вӑл аслӑ халӑхӑн аслӑ ывӑлӗ пулнӑшӑн, вӑл социалисӑмшӑн кӗрешекенсен сталинла çарӗн малтанхи ретӗнче пынӑшӑн, Ленинпа Сталинӑн соратникӗ тата тусӗ пулнӑшӑн вӗлернӗ.

Патша тӗрмин хуçисем тума пултарайманнине çӗршыва сутакан троцкиссемпе бухаринецсем турӗç.

Социалисӑм çӗршывӗн ӗççыннисем, хӑйсен йурӑçине чысланӑ май, унӑн произведенийӗсен пуйанлӑхне вӗренсе пынӑ май, унӑн çакӑ сӑмахӗсене йаланах асра тытса тӑрӗç: „Тӑшман парӑнмасть пулсассӑн—ӑна пӗтереççӗ“. Халӑх Горькин çакӑ сӑмахӗсене çӗр çинче аслӑ пролетерилӗ писателе вӗлерме хавхалантаракансенчен пӗр çынне йулмиччен манмӗ. (ТАСС).

М. ГОРЬКИЙ

Сормӑвӑ рабочийӗсене каланӑ сӑмахран

Акӑ мӗскере ӑнланса илмеле сирӗн. Совет Союзӗнче пулса пыракан калама çук пысӑк ӗç—сирӗн ӗç. Есӗр халӗ ӗнтӗ пролетарисем мар, есӗр çӗршывӑн хуçисем, унӑн чӑн-чӑн, пӗтӗмӗшле хуçисем. Есӗр—çӗнӗ государствӑна тӑвакансем, çакна та сирӗн лайӑх астуса тӑмала. Йулташсем, сирӗнтен нумайӗшӗ харпӑрхӑйӗн уйрӑм пурнӑçӗшӗн ытларах тӑрӑшма пуçлаççӗ. Çапла кашни хӑйшӗн çеç тӑрӑшма пуçласан, епӗр вара каллех ӑстан килнӗ, çавӑнта пыратпӑр, хамӑр пӑрахса хӑварнӑ кивӗ тарçӑлӑ пурнӑç патне пыратпӑр. Епӗр каллех хамӑра хуçасем аллинче пурӑнмала тӑватпӑр. Акӑ мӗнрен шикленмеле. Тӳррипе калатӑп: мешченлӗх нумай пирӗн, йулташсем, пирӗнте кивӗ тӗнче йӑлисем нумай йулнӑ, пирӗн вӗсемпе ваййлӑн кӗрешмеле. Пурнӑç пирӗнтен нумай пӗлӳ ыйтать, пысӑк пӗлӳлӗ пулма хушать. Çавӑнпа та сирӗн хӑвӑрӑн çынсенчен лайӑххисене, талантлӑраххисене тата пултарулӑраххисене малала куçарса пымала; вӗсем есӗр тунӑ ӗççене сыхлама тата малала туса пыма пултарччӗр.

Йулташсем, сирӗн ӗç нумайа пӗлтерет. Есӗр хӑвӑр, Совет Союзӗнчи рабочи клас тунӑ ӗççем мӗн пек пахине час-часах ӑнланса илместӗр. Çитӗнӳсем калама çук пысӑк.

Йулташсем, епӗ калани тен сире ӑнланмала мар пулӗ, анчах епӗ кунтан ытла ӑнланмала калама пултараймастӑп.

...Епӗ партире тӑракан çын мар, коммунис мар, анчах парти, вӑл сирӗн чӑн-чӑн миме, сирӗн вӑй, сире йертсе пыракан çулпуçӗ пулса тӑни çинчен каламасӑр тӑма пултараймастӑп.

Акӑ мӗн каласшӑн пултӑм епӗ сире, ак мӗне ӑнланмала сирӗн. Парти пысӑк ӗç тӑвать, пысӑк ӗç тӑваççӗ коммуниссем. Вӗсем нумай ырӑ ӗççем тума вӗрентрӗç, халӗ те вӗрентеççӗ, хӗвеланӑç Йевропари сирӗнтен темчул начартарах условисенче пурӑнакан пролетариата хавхалантараççӗ... Сирӗн ӗç Йевропӑри пролетариатшӑн мӗнле пысӑк вырӑн йышӑннине есӗр ӑнлантӑр-и? Сирӗн ӑна пӗлме кирлӗ. Сирӗнтен вӗренеççӗ вӗсем, пӗтӗм Йевропӑ пролетариачӗ, пӗтӗм Йевропӑ рабочи класӗ сирӗн çулпа кайасси çинчен нимӗн те иккеленмеле мар.

...Спасибӑ чысшӑн, йулташсем, спасибӑ. Кунта пур те манран мӗн те пулин çырма, сирӗнпе ӗçлеме ыйтрӗç—ӑна манран ыйтма кирлӗ мар, вӑл манӑн ӗç, манӑн професçи, манӑн ӑсталӑх. Епӗ ӗнтӗ 25 çула йахӑн, ытларах та-и тен, вырӑс ӗçхалӑхӗпе, пуринчен ытла—хамӑн кӑмӑла тӑван вырӑс рабочи класӗпе, пурӑнатӑп. Епӗ хама чи революцилӗ, тата ун çине етемлӗх историйӗ пысӑк чыс, тӗнчене улӑштарса çӗнетес задачӑна хунӑ рабочи класпа пӗрлех хама та революционер теме хӑйатӑп.

Тӑшман парӑнмасассӑн—ӑна ваййпа пӗтереççӗ

(М. Горькин статйисенчен илнӗ сыпӑксем.)

— Пирӗн çӗршывра чейе тӑшмансем пире хирӗç апат-çимӗç выçлӑхӗ хатӗрлеççӗ, кулаксем коллективис хресченсене вӗлерсе, вут тӗртсе, тӗрлӗрен ирсӗр майсемпе усӑ курса, террорлаççӗ,—камӑн истори панӑ вӑхӑчӗ пӗтнӗ, вӗсем пурте пире хирӗç, çакӑ ӗнтӗ пире граждӑн вӑрçи вӑхатӗнчи пек пулма тивӗç парать. Апла пулсан, çапла вывӑд тухса тӑрать: тӑшман парӑнмасть пулсассӑн,—ӑна ваййпа пӗтереççӗ.

— Епӗр тӗнче буржуазине хирӗç пулса пыракан татти-сыпписӗр вӑрçӑн условийӗсенче пурӑнатпӑр. Çакӑ ӗнтӗ рабочи класа хӑйне хӑй сыхланма, вӑл хӑй вальли мӗскӗр тунине пурне те сыхлама хушать...

„Детство Горького“ фильмӑн пӗррӗмӗш серири кадр: Альоша Пешков (Альошӑ Ларский артис) тата унӑн аслашшӗ (Тройановский артис). (Союзфото).

А. М. Горькин пичетленмен алçырӑвӗ

А. М. Горькийӗн архивӗ (тӗнче литературин А. М. Горький йачӗпе хисепленекен институт çумӗнче) писателӗн алçырӑвӗсем хушшинче упранна, ку таринчен ниçта та пичетленмен „По пути на дне“ йатлӑ сценарине пичетлесе кӑларма хатӗрленнӗ. Виçӗ пайлӑ сценари Горький драматургин ахахӗн —„На дне“ пйесӑри сӑнлӑхсен уйччинхи пурнӑçӗсене кӑтартса парать.

Пӗррӗмӗш епизод Лукан историне каласа парать. Лука—йалти старастӑ, кулак тата выçӑ çын. Вӑл йал çыннисем помещикрен илнӗ çаранпа пӗр пӗччен усӑ курса пурӑнать.

— Халӗ ӗнтӗ старастӑ пирӗн йуна ӗмсе илет,—теççӗ хресченсем.

Лука пӗр хресченӗн арӑмне ваййпа тытса пусмӑрлать. Çав хресчен вара тарӑхнипе Лукан хапхинчӗн çакӑнса вилет. Сутра Лука вилнӗ хресченӗн арӑмне тытса пусмӑрланине йышӑнать. Ӑна арӗслеççӗ, анчах вӑл тӗрмерен тухса тарса, тӗнче тӑрӑх çӳреме пуçлать.

Иккӗмӗш епизодра Сатинӑн иртнӗ пурнӑçне сӑнласа кӑтартнӑ. Сатин—телеграфис, идеалисла шухӑшлакан çын. „Вӑл, савӑнӑçлӑн кулса илсе, чӑнлӑха тупнӑ çын пек:

—Пурте—етемре, пурте—етемшӗн“,—тет. Сатин 17—18 çулхи хӗрачалӑ пӗр тӑлӑх, чухӑм хӗрарӑм патӗнче пурӑнать. Ку хӗрарӑмӑн мӗн пур тупри йапалине парӑмсемшӗн торгипе сутса пӗтерсе, хӑйне хӗрӗпе пӗрле урама хӑваласа кӑларас вӑхӑт çитет.

Сатин, укçа выљаса илсе, ӑна чухӑн хӗрарӑмпа унӑн хӗрне парса вӗсене чухӑнлӑхран хӑтарас шутпа, выљав çуртне кайать.

Вӑл чейелейсе выљакансен аллине кӗрсе ӳксе пӗтӗм укçине выљаса йарать. Вӑрӑсенчен пӗри ӑна çаратма кайма вӑлтать. Вӑрланӑ укçана Сатин хӑй пурӑнакан пӳлӗм хуçине—Лизӑна парасшӑн.

— Ку укçасене есӗр ӑçтан тупрӑр? Ку сирӗнехи, вӗсем — таса укçасемех-и?—тесе ыйтать хӗрача.


— Çапла, таса укçасемех,—тет Сатин,—епӗ вӗсемшӗн тӳрлӗхе панӑ.

Сатин укçасене çурса тӑкса, урисемпе таптаса пӗтерет. Полицисем пырса кӗреççӗ, ӑна арӗслеççӗ.

Тӗрмере ларнӑ чухне Сатин кантӑк ванчӑкӗпе чӗрсе стена çине çапла çырса хурать:

„—Пурте—етемре, пурте етемшӗн“. Хӑй çак сӑмахсем çине пӑхса ахӑлтатсах кулать.

Виççӗмӗш, вӗçленмен, епизодра Баронпа Настӑн историне сӑнласа панӑ. Ку епизодрах малашне „На дне“ сӑнлӑхсем пулса тӑракан ытти геройсем те,—Бубнӑв, вӑрӑхурахла Костыльов, полицейски Медведӗв т. ыттисем, — курӑнаççӗ. А. М. Горький ку сценарине 1922—1923 çулсем хушшинче çырнӑ пулӗ, теççӗ.



А. М. ГОРЬКИЙ
(1932 çулта)

* * *

Горький пурнӑçне кӑтартакан кино-картинӑсем

„Союздетфильм“ пирӗн çӗршывшӑн кӑна мар, пӗтӗм етемлӗхшӗн аслӑ писатель пулса тӑракан А. М. Горькийӗн ача чухнехи вӑхӑтне кӑтартакан кино-картинӑсенчен пӗрине ӳкерсе пӗтернӗ. Ӑна И. Груздӗвпа М. Донской çырнӑ сценари тӑрӑх ӳкернӗ.

Кӑçал тата Горький „В людях“ йатлӑ произведенийӗ тӑрӑх çав йатлах тепӗр кино-картинӑ ӳкерме пуçлаççӗ. Унӑн сценарине çырнӑ чухне Горькин „Двадцать шесть и одна“ калавӗпе те усӑ кураççӗ.

Горькин ача чухнехи вӑхӑтне кӑтартакан картинӑсен йулашки çерине „Мои университеты“ произведенипе усӑ курса тӑваççӗ.

Ку фильмсем ача-пӑчасене çеç мар, çитӗннисене те интереслентереççӗ. Мӗншӗн тесен, кашни ӗççынни хӑйӗн йуратнӑ писателӗн пурнӑçне пӗлесшӗн çунать, унтан пурӑнма, пурнӑçа тата тӑван çӗршыва чӗререн йуратма, çав вӑхӑтрах тӑшмансемпе паттӑрӑн та хайаррӑн çапӑçма вӗрентет. Пурнӑçа, тӑван çӗршыва, етемлӗхе чӗререн йуратас тӗлӗшпе, социалисӑм çӗршывӗн тата пӗтӗм етемлӗхӗн тӑшманӗсемпе пӗр шиксӗр, паттӑррӑн çапӑçас тӗлӗшпе Алексей Максимӑвич Горький пуриншӗн те пысӑк пример пулса тӑрать.

Ытти аслӑ çынсем пекех, Горький те çуралсанах аслӑ писатель пулман, унӑн пултарулӑхӗ йерипен аталанса пынӑ. Çав аталанӑвӑн малтанхи тапхӑрне Горькийӗн ача чухнехи вӑхӑчӗ çинчен ӳкерекен фильмсем уççӑн кӑтартса пареççӗ. Малтанхи çерине Совет Союзӗнчи пысӑк хуласенче кӑтартма пуçланӑ.

А. ЕРЛИХ

М. ГОРЬКИН МАЛТАНХИ РЕВОЉУЦИЛӖ ПУБЛИЦИСТИКИ

Государствӑн политикӑлӑ литературӑ кӑларакан издательстви çывӑх вӑхӑтрах Максим Горькин малтанхи революцилӗ публицистикин пӗррӗмӗш томне пичетлесе кӑларать. Унта статйасем, воззванисем, памфлетсем, Йевропӑ интеллигенцин представителӗсене, Англипе Францин общественнӑçне чӗнсе каланисем кӗреççӗ. Ку произведенисем, 1905 çулта йе пирвайхи революци пулса иртнӗ хыççӑн çырнӑскерсем, ун чухне вӑрттӑн тухса тӑракан хаçат-журналсенче, йе Хӗвеланӑç Йевропӑн пичетӗнче çеç пичетленнӗ. Российӑри вулакансем йышлӑ масси вӗсене пачах пӗлмен.

Çавӑ хӗрӳлӗ, патша тытӑмне ылханнипе тата курайманлӑхпа тулнӑ статйасем калама çук пысӑк усӑ панӑ. Вӗсем пӗтӗм культурӑлӑ тӗнче умӗнче патша бӳрократӗсен чӑн-чӑн сӑн-питне уçса кӑтартнӑ. Вӗсем йанвар уйӑхӗнче пулса иртнӗ трагедилӗ событин тата вырӑс рабочийӗсен патша пусмӑрне хирӗçле хӑватлӑ йухӑмӗ мӗншӗн пулнине ӑнлантарса панӑ. Вӗсем патша йыттисен вайсӑрлӑхӗпе ирсӗрлӗхӗ çинчен, революцилӗ шухӑшсемпе хавхаланнӑ халӑхӑн паттӑрлӑхӗ çинчен каласа кӑтартнӑ. Вӗсем патша влаçне пӗррӗмӗш вырӑс революцине йун ӑшне путарма йут патшалӑхсенчен укçа-тенкӗ тата хӗçпӑшалсем илме чӑрмантарнӑ.

Халӗ ӗнтӗ Максим Горькин малтанхи революцилӗ публицистикине пӗр çӗре пухнӑ, хӑшпӗр произведенийӗсем вырӑс пичетӗнче пӗррӗмӗш хут тухаççӗ.

Кӗнеке „Пур вырӑс граждӑнсене тата Йевропӑри государствӑсен обществӑлӑ шухӑшне“ чӗнсе каланипе уçӑлать. Горький ку чӗнӗве, Витте тата ытти министрсем патне депутаципе кайнӑ тимиçе литератӑрсемпе профессӑрсен йачӗпе йанварӗн 9-мӗшӗнче йунлӑ çапӑçу пулни çинчен асӑрхаттарас шутпа çырнӑ.

Тимлӗнни, ыйтни, тархаслани—пурте кӑлӑхах пулнӑ. Правительствӑ „урок парас“ шутпа, хӑйӗн пысӑк вайӗсемпе революци тӑвакансене пистерес шутпа, урамсене йунпа çӑвасшӑн çуннӑ. „Правительствӑ, кайран çар ваййӗпе усӑ курма май пултӑр тесе, йурийӗх ытлашши хӗстермесӗр, стачкӑсен йухӑмне ӳсме тата сарлака демонстрацисем иртерме май панӑ“,—тесе çырнӑ В. И. Ленин „Начало революции в России“ статйинче „—Вӑл ун патне çитерчӗ те. Пиншер вилӗ тата пиншер аманнисем—çапла пулчӗç Петербургри йанварӗн 22(9)-мӗшӗнче пулса иртнӗ йунлӑ вырсарникунӑн итогӗсем“.*)

Çавӑ кун ӗнтӗ—йанварӗн 9-мӗшӗнче, кӑнтӑрла иртсен виçӗ сехетре, вилнӗ тата аманнӑ рабочисене курнипе, айӑпсӑр рабочисен ушкӑнне пӑшалсемпе персе хӑвалланине курнипе тарӑхса, Горький Российӑн тата Йевропӑри пӗтӗм государствӑсен обществӑлӑ шухӑшне патне хӑйӗн чӗнӗвне çырнӑ.

Вӑл министра—Çвятополк-Мирский князьа „ӗç хӗçпӑшалпа усӑ курмалах пулман çӗртенех, вырӑс граждӑнӗсене ним шутсӑр вӗлерсе пӗтернӗшӗн“ айӑплать. Горький иккӗмӗш Микулай патша пирки çапла çырнӑ: „Иккӗмӗш Микулайа рабочисен йухӑмӗ мӗнле пулассй çинчен тата ӑна пӑхӑнса тӑнӑ, халӗ салтаксем пӗр айӑпсӑр вӗлерсе пӗтернӗ граждӑнсен ырӑ кӑмӑлпа ырлӑх ыйтма пырасси çинчен пӗлтернӗ, ун çинчен пӗлсе тӑрсах, вӑл вӗсене хӗнеме ирӗк панӑ,—мирлӗ çынсене вӗлерсе пӗтернӗшӗн епӗр ӑна та айӑплатпӑр...“

Хӑй вӑхӑтӗнче Лондӑнра тата Парижре пичетленнӗ „Дело Николая Шмидта“ очӗрк патша тӗрмисенчи тискерлӗх тата пусмӑрлӑх çинчен каласа парать. Николай Шмидт—ашшӗнчен сӗтел-пукан пысӑк хапрӑк илсе йулнӑ пуйан çамрӑк çын. Вӑл Мускаври университетӑн студенчӗ пулнӑ, çав вӑхӑтра вӑл социал демократилӗ партин большевикла фракцийӗ çумне йавӑçнӑ. Хӑйӗн хапрӑкӗнче вӑл ӗç кунне чакарнӑ, рабочисен пурнӑç условийӗсене лайӑхлатнӑ; декабӗр уйӑхӗнче пулнӑ хӗçпӑшаллӑ восстани вӑхӑтӗнче революцилӗ дружинниксем вальли хӗçпӑшалсем илсе панӑ тата большевиксен Мускаври организацине Горький урлӑ 20.000 тенкӗ укçа панӑ. Патша палачӗсен çамрӑк студента хайаррӑн курайми пулма сӑлтавсем пулнӑ, вӗсем ӑна вӗлернӗ. Горький çырнӑ очӗрк патша тарçисем Шмидтран мӗнле мӑшкӑлланине тата ӑна мӗнле асаплантарнине калама çук ваййлӑн каласа парать.

Ку очӗрка 1906 çулта, Столыпин революцине пусарни çинчен, çӗршывра „лӑпкӑлӑх пуçланни“ çинчен пӗтӗм тӗнчене ӗнентерме тӑрӑшнӑ вӑхатра, çырнӑ.

Максим Горький çапла çырнӑ: „Анчах революци пусарӑнман, вӑл нихçан та пусарӑнас çук.

Çулӑмӑн вӑхӑт-вӑхӑтпа хӑйне тӗтӗмпе хупласа, çав тӗттӗмре хайар сӑн-сӑпатне пытармала пулать,—анчах, сӳнсе ларма мар, пӗтӗм вӑйа пухма, çӗнӗрен çулӑмланса, пурне те çавӑрса илсе çунтарса йама тӗтӗмпе хупӑрланмала пулать“.

Аслӑ писатель, хайарлӑхпа тулнӑ нумай статйасемпе чӗнсе калани-сенче çеç мар; çаван пекех вӗлермеле харсӑр ваййпа тулнӑ памфлечӗсенче те революцилӗ вӑйсене ӳстерсе пынӑ.

Çавӑн пек памфлечӗсенчен перинче статский советнике сӑнласа кӑтартать. Хисеплӗ господин редакцине çыру çырнӑ. Ӑна хаçатра, унӑн статский советникӗн, хватерне саккунлӑ влаç представителӗсем пырса пӑхнине карикатурӑласа кӑтартакан заметкӑ пичетленсе тухни тӗлӗнтернӗ. Вӑл влаçа мухтать, влаç представателӗсем хӑйсен „службӑ ӗçне“ çав тери тимлӗ тунӑшӑн савӑнать.

„... манӑн хватерте усала пӗлтерекен нийепле йапала та тупман тата, отрйадӑн пӗчӗк чинӗсем, кухньӑра ларса, епӗ хӑнасем вальли илсе хунӑ 7 бутылка сӑрана, пӗр бутылкӑ Понте-нане ӗçсе йанине тата пӗр коробка сартинпа йуçӗтнӗ кефалья (вӗсене банкипех çисе йанӑ пулӗ) шутламасан, нимӗн те çухалман“.

Влаçӑн тимлӗ представителӗсем статский советникӗн хватерӗнче пулемет тупнӑ. Анчах лайӑхрах çавӑркаласа пӑхнӑ хыççӑн вӗсем ӑна „аристон“ йатлӑ музыкӑ инструменчӗ вырӑнне çеç шутламасӑр тӑма пултарайман. Ырӑ сунакан килхуçи чӑнах та вӑл çаплине кӑтартас шутпа çавӑнтах патша гимӑнне выльаса панӑ. Унтан тата отрйад начальникне кӑмака умӗнче выртакан хескӗч çавӑрӑнтарса пӑхтарнӑ, вӑл унпа хӑй нумай пӗлнине, историпе паллашнине палӑртнӑ: Павӑл императӑра кӑмака хӗскӗчӗпе хӗстерсе вӗлернине пӗлсе тӑнӑ вӑл...

„Епӗ експедицине йӗртсе пыракана çавӑнтах вӑл инструмент мана питех кирлӗ марри çинчен, унпа усӑ курма пӑрахасси çинчен пӗлтертӗм. Апла каланине хирӗç начальник кӑмӑллӑн çеç: „Тӗрӗс тӑватӑр“,—тесе ответлерӗ“.

Ку памфлетра писатель чи пӗчӗк йапаласенче те пысӑк хӑрушлӑх куракан влаççем çухалса кайнине тата вӗсем имшеррине, урӑхла пулма та пултарайман пек, тарӑнӑн, уççӑн çырса кӑтартнӑ.

Правительствӑ йанварӗн 9 мӗшӗнчи залпсемпе хирӗçле ваййӑн пӗтӗм хӑватне, патша влаçӗпе революцилӗ майпа хирӗçес шухӑша çӗмӗрсе тӑкма шухӑшланӑ. Апла пулас вырӑнне вӗсем революцилӗ курайманлӑхӑн хайар тӑвалне вӑратрӗç, вӑл тӑвалӑн ваййӗпе виçӗ çӗр çул хушши пуç пулса тӑнӑ патша стройӗ хавшанчӗ. Халӑхран хӑраса ӳкнӗ влаççем урма, тискер кайӑкланма пуçланӑ. Вӗсем хӑйсен хӗçӗв експедицийӗсемпе, çынсене нимайсӑр персе пӗтернипе, çакса вӗлермели вырӑнсенче ӗçлекен тата нагайкӑ геройӗсем урнипе вайне мар, хӑйсен вӑйсӑрлӑхне çеç кӑтартрӗç.

Пролетарилӗ писатель çакӑн çинчен Хӗвеланӑç Йевропари государствӑсене ӗнентерӳлӗн те хӗрӳлӗн каласа кӑтартнӑ. Патша йут государствӑсенче займсем шыранӑ,—Максим Горький самодержавине пулӑшассине хирӗç тӑма тата революцине пулӑшма чӗннӗ.

Парижре пичетленӗ статйинче Горький çапла çырнӑ: „Вырӑс правительствине пӗр пус укçа та ан парӑр — вӑл халӑхпа çыхӑнса тӑмасть, мӗлйунсен чӗрисем такçанах ӑна вилӗм сунаççӗ“.

Лондӑнри хаçатсенче пичетленнӗ тепӗр статйинче писатель çапла ыйту лартать: „Есӗр кампа çыхӗну тытасшӑн? Икӗ Российӑ пур. Пӗр Российӑ, вӑл—Микулай императӑр бӳрократийӗ тата „вырӑс халӑх союзӗ“, тепӗр тӗрлӗ каласан, усал та тискер çынсем йертсе пыракан кӗçӗн классӗн 10.000 çынӗ; иккӗмӗш Российӑ, вӑл—100.000.000 славйан тата 50.000.000 йахӑн Российӑ империн составне кӗрекен ытти нацисен халӑхӗ. Çакӑн чухлӗ халӑх пӗтӗмпех, пӗр çын пек пулса, патшапа тата унпа пӗрле пурӑнакансемпе уншӑн тӑракансене кураймасть. Хӑшне есӗр чӑн-чӑн, пурӑнма, ӗçлеме тата есӗр питӗ йуратакан, питӗ хаклакан цивилизацине тума пултаракан Российӑ тесе шутлатӑр?“

Çакӑ статйасемпе пӗр вӑхӑтрах Англире тата Францире Горькин рабочисене чӗнсе каланисем пичетленеççӗ. „Пӗтӗм рабочисен интересӗсен пӗррелӗхӗшӗн есӗр вырӑс рабочийӗсене пулӑшма ан памала“,—тет Горький.

М. Горький патша влаçне хирӗç, халӑх ылханакан правительствӑна займ парассине хирӗç ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешет. Çапах та Франци правительствипе банкирӗсем патшана займ парсан, Горький тепӗр хут çапла çырать:

„Вырӑс революцийӗ хуллен, нумай вӑхӑт ӳссе пырӗ, анчах çапах

(Йулашки 4 мӗш страницӑра).

*) В. И. Ленин. Сочиненисем. VII-мӗш том, 79—80 стр.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Кустри кружок ĕçĕ

Кушкă кустинчи (Трак р.) парти вĕренекен кружокĕ иртнĕ кĕркунне çентябрь уйăхĕнче ĕçлеме пуçланă. Кружока нумай çулсем хушши пропагандис пулса ĕçленĕ И. П. Петров йертсе пырать. Вăл занятисене лайăх хатĕрленсе иртерет, Ленин тата Сталин произведенийĕсене, „В помощь партучебе" журнала кашни занятин умĕн вулать, конспектсем хатĕрлет. Пăхса вĕренмели пособисемпе, парти историне вĕренмели альбомпа, тĕрлĕрен картăсемпе усă курать. Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче 33 занятиь туса иртернĕ, халĕ йулташ 12-мĕш темăна вĕренеççĕ. Кружокра вĕренекенсем занятисене вăхăтра çÿреççĕ, сăлтавсăр çÿременнисем пĕр çын та çук. Çулталăкра та пĕр занятине çеç чукунçул тунă çĕре кайнипе вăхăтра туман пулнă, ун вырăнне урăх кунта туса иртернĕ.

Вĕренÿ пахалăхĕ мĕнле-ха? Кружокра вĕренекенсенчен Васильев, Осипăв, Константинăв тата Йакăвлĕв йулташсем лайăх, тăрăшса вĕренеççĕ. Вĕсем Ленин тата Сталин произведенийĕсене вулаççĕ, мĕн вĕреннине çырса пыраççĕ.

Кружокра кайа йулса пыракансем те пур. Акă, парти кандидачĕ Гордейĕв йулташ çителĕклĕ вĕренеймест-ха, вăл занятисене хатĕрленсе пымасть. Ăна пропагандисăн вĕрентÿре мала тухма пулăшмалла.

Коужок членĕсем Осипăв тата Йакăвлĕв парти кандидачĕсем пулнă, халь парти членне куçнă. Сочувствующисен ретĕнче тăнă Йакăвлĕв, Константинăв, Филиппăв тата П. Йакăвлĕв йулташсем парти кандидатне кĕнĕ. Кружокра вĕренекенсенчен чылайĕшĕ халĕ районри ответлă вырăнсене ĕçлеме лартнă. Йакăвлĕв йулташа—райĕçтăвком инструкторне илнĕ, Константинăва райкома учот тĕлĕшпе ĕçлеме илнĕ, Филиппăва—районри почта уйрăмне ĕçлеме лартнă. Парти райкомĕ кружок ĕçĕсен çинчен икĕ хутчен сÿтсе явнă. Кружок руководителĕне Петров йулташа пăхса вĕренмели пособисемпе лайăхрах усă курма, кашни вĕренекен занятине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тăма хушнă. Ку кăтартусене Петров йулташ ĕçре пурнăçлать.

Районри парткабинетра ытти пропагандиссем умĕнче пĕр кăтарту занятийĕ иртернĕ. Ку занятипе ытти пропагандиссем хăйсене валли çĕнĕ кирлĕ тĕслĕхсем илнĕ.

А. Михайлăв.

Комсомолĕцсем тăрăшса ĕçлеççĕ

Вăрман Кипекри (Шăхасан р.) Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхоз çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацинче Йакăвлĕв йулташа комсорга суйласа лартнăранпа комсомолĕцсем лайăх ĕçлеме тытăнни курăнать.

Комсомолĕцсем колхозра тата кашни бригадăра стена хаçачĕсем кăларса тăраççĕ. Колхозăн уйрăм участкăсенче пулакан çитменлĕхсене кăтартса, колхозниксен массине çав çитменлĕхсене пĕтерме мобилизацилеççĕ.

Уйра, кăнтăрлахи кану вăхăтĕн... сем иртереççĕ. Комсомол организацийĕ уйăрнă агитатăрсем суйлав капанийĕ мĕнле пыни çинчен, суйлав саккунĕ çинчен ăнлантараççĕ, тĕнчери лару-тăрупа паллаштараççĕ.

Агитаципе пропаганда ĕçне колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче анлăн туса пыраççĕ. Вĕсем хушшинче уйрăмăнах П. Йакăвлĕв йулташ тимлĕн ĕçлет.

Комсомолĕцсем агитаци ĕçĕнче кăна мар, ытти участкăсенче те пахă тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Аслă коньух Йегорăв коньухсем хушшинче суйлав саккунне ăнлантарса парать. Лашасем пăхакансем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе лайăхлатса, социалисăмлă ăмăртăва сарса пынипе, кăçал пĕр ырхан лаша та çук.

...кура çамрăксем комсомол ретне кĕреççĕ. Нумай пулмасть 5 çамрăка комсомол ретне илтĕмĕр.

Т. Никишăв.

Учителсем аттестацинче пулчĕç

Май уйăхĕнче аттестаци комиççи Тăвай районĕнче ĕçлерĕ. Районти 195 учителрен аттестаци витĕр 181 учитĕл тухрĕ. Аттестацинче пулнă учителсенчен 62 учителе пуçламĕш шкулта, 58 учителе туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче ĕçлеме права панă. 8 учителе ĕçрен хăтарнă, ытти 53 учителе кĕске срук хушшинче вĕренсе тивĕçлĕ квалификаци илме кăтартса хăварнă.

Аттестаци хыççăн учителсен шкулта ĕçлес хастарлăхĕ ÿсни палăрчĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр çĕрте шкулăн ответлă ĕçне кирлĕ таран туйса илеймен учителсем те пур-ха. Уланкăри пуçламĕш шкулта IV мĕш класра вĕрентекен Н. Дмитрийĕв учитĕл вырăс чĕлхипе пĕлÿ тĕрĕслевне кивĕ диктант тăрăх туса иртернĕ. Диктантра 67 сăмах. 67 сăмахра 11-шер йăнăш тунисенех вăл „хорошо" паллăсем лартса панă, йăнăшсене тÿрлетмесĕр хăварнă.

Тăрмăшри туллимар вăтам шкулта вырăс чĕлхипе вĕрентекен Çеменăв ÿсĕр пулнипе пĕлÿ тĕрĕслевĕнче пулман. А. Шурдова, А. Иванов учителсем вырăс чĕлхипе хăйсем те начар пĕлеççĕ. Вĕсем аттестаци комиççийĕ панă ыйтусене ответ пама пултараймарĕç. Учителсем мĕнле ĕçленипе кунта шкул директăрĕ Григорйĕв, вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ М. Дарăв пачах та интересленмен.

К. Лазарĕв.

3.000 тенкĕ выльăса илчĕ

ЙЕПРЕÇ. Епеç йалсоветне кĕрекен Вăтайалĕнчи пуçламĕш шкулта вĕрентекен В. С. Соловйов й. Иккĕмĕш пилĕкçуллăх (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) займпа 3.000 тенкĕ выльăса илчĕ. Çавăн пекех Калинин йачĕпе тăракан колхоз членĕ Захар Антонăв та 100 тенкĕ выльăса илнĕ.

Çем. Федотăв.

Германи Чехословакине хирĕç вăрçăпа тухма хатĕрленни

ПРАГА, Йунĕн 16-мĕшĕ (ТАСС). Германи фашисĕсем Чехословакине хирĕç вăрçăпа тухма хыттăнах хатĕрленеççĕ. Йулашки кунсенче Чехословаки чикки патне çĕнĕрен çар часĕсем, пуринчен ытла артиллерине илсе пынă.

Çак кунсенче Германире секретлă распоряжени кăларнă, унта предприйатисен хуçисене хăйсен предприйатийĕсенче миçе арçын ĕçленине тата вĕсем вырăнне мĕнле ĕçре хĕрарăмсем ĕçлеме пултарнине васкавлăн палăртма хушнă.

Германи пичечĕ Чехословакине хирĕç кампани туса пыма халĕ те пăрахмасть-ха.

Иртнĕ ерне хушшинче Берлинра фашисла „трудовой фронтăн" уйрăм организацийĕн пухăвĕсем пулса иртнĕ, вĕсем Чехословаки çинчен тăракан ыйту тĕлĕшпе пулнă. Фашиссен докладчикĕсем ССР Союзне хирĕç тата Йевропари ытти государствăсене хирĕç хытă тухса калаçнă, çав государствăсене: „вĕсем Чехословакине тытса илме чăрмантараççĕ"—тесе вăрçнă. „Чехословакин, — тесе каланă пĕр докладчикĕ,—хăй тĕллĕн пурăнма права çук".

Анчах та, çакăн пек агитацилени фашиссен айалти организацисен членĕсем хушшинче ăнçăлăнах пулса пыраймасть. Чехословаки чиккипе йунашар районсенче штурмовиксене сăнаса пăхас тесе мобилизацилеме хăтлансан, штурмовиксенчен нумайĕшĕсем сборнай пунктсене пыман. Германин пĕр хулинче штурмовиксен отрйачĕ пĕтĕмпех чикĕ патне кайассинчен пăрăннă. Çакăн хыççăн отрйада салатса йанă, штурмовиксене организацирен кăларнă, руководителсенчен чылайĕшне арестленĕ.

Фашисла организацисен рйадовой членĕсем Гитлерĕн йут çĕрсене тытса илес политикипе килĕшменни вăл фашиссен организацийĕсенчен массăлăн тухнинче те курăнса тăрать.

Агриппина Андрейĕвăн телейлĕ ачисем

ÇАНАШ. Кив-Ахпÿрт йалĕнче йышлă ачалă çемйесем чылай. Акă, Агриппина Андрейĕва колхозницăн 9 ача. Ĕлĕкхи асаплă пурнăçра пулсан йышлă ача-пăча чухăн хресчене хуйхă-суйхă çеç кÿнĕ.

Совет влаçĕ ачасене пăхса ÿстерме чăн-чăн условисем туса пачĕ. Йышлă ачалă амăшсене государствăран укçа парса пулăшасси çинчен правителствă постановленийĕ йышăнни хăçалхи ийунĕн 27-мĕшĕнче икĕ çул тултарать. Çак икĕ çул хушшинче Агриппина Андрейĕва государствăран виçĕ хут 2-шер пин тенкĕ пулăшу илчĕ.

Андрейĕва колхозница пуйан та культурăлă пурăнать. Вăл 4 тĕслĕ хаçат-журнал çырăнса илет. Пÿрчĕ таса. Ачисене лайăх тумлантарнă. Аслă хĕрĕ Чăвашсен педагогика институтĕнче вĕренет, икĕ ачи вăтам шкулта вĕренеççĕ.

Çак телейлĕ пурнăçа ĕçсыннисене Ленин—Сталин партийĕ туса панă. Çавăнпа та Андрейĕва йулташ çемйинчи суйлавçăсем Верховнай Советсен çитес суйлавĕсенче коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама хатĕрленеççĕ.

А. Кириллăв.

Махоркăна халех лартса çитерес пулать

КĂЛЬХЕРРИНЧИ (Вăрнар р.), „Трактăр" колхоз ийунĕн 8-мĕшĕнче махоркă лартса пĕтернĕ. Колхозра махоркă лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен С. Кириллăв йулташ ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ. Махоркă лартмали лаптăка участкăсене уйăрнă. Çав участкăсем çумне икшер çын уйăрса тухнă. Çакăн пек тунă махоркă лартассин пахалăхне ÿстернĕ, кашни колхозника ĕçшĕн ответлă пулма май панă. Кашни участкă çинче пĕчĕк йупасем лартнă. Çав йупа çине махоркăна хăш вăхăтра тата кам лартнине çырса тухнă.

Махоркă лартас ĕçре Çеменăвă Александра тата Анастаçи колхозницăсем чаплă тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем лартнă махоркăсем пурте лайăх, чĕрĕлеççĕ. Д. Крачкова та хăйĕн участкине аван пăхать. Вăл махоркă лартса тăвассипе пиллĕкĕмĕш çул ĕçлет. А. Иртышăвă колхозница та хăйĕн ĕçне пахă туса пырать.

Анчах çак стахановкăсене колхоз правлени кирлĕ пек пулăшса пыни çук. Пилĕк çул ĕнтĕ махоркăна пĕр вырăнах лартаççĕ. Апла пулсан та çав участкă çине кăçал та, çавнашкалах иртнĕ çулсенче те тислĕк кăларман. Çавна май махоркă тухăçне, унтан тупăш илессине чакараççĕ. Колхоз правленийĕ махоркă лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекенсене пĕр лаша та уйăрса пыман.

Хурăнсăрти Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозра ĕçсем пачах урăхла вара. Кунта махоркă лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен Захарăв йулташ кăçал участкăна 1125 лав тислĕк кăларнă. Кунпа пĕрлех çĕре минераллă удобренисем: кали тăварĕ т. ыт. те парса çемçетнĕ. Колхозра лайăх çемçетнĕ 10 гектар çине пысăк пахалăхпа махоркă лартса хăварнă.

Районра 11 колхозра кăна махоркă лартса пĕтернĕ. Кирăв йачĕпе тăракан, „Çута хĕвел", „Майăн пĕрремĕшĕ", Ленин йачĕпе тăракан колхозсем махоркă лартас тĕлĕшпе кайа йулса пыраççĕ. Çак колхозсенче махоркăна хăвăртрах лартса пĕтерме пур майсем те пулнă, анчах ку ĕçе хакламан пирки вăхăта чăсса пыраççĕ.

Вăрнар районĕ махоркă лартас плана 64 процент çеç тултарнă. Апла пулсан та çакă вăл çĕрĕç пайĕн работникĕсене хумхантармасть пулас.

Махоркă лартас ĕç пĕр Вăрнар районĕнче çеç мар, ытти районсенче те начар пырать. Ийунĕн 10-мĕшне республикă махоркă лартмали плана 54,6 процент кăна тултарнă. Уйрăмах Хĕрлĕ Чутай—(18%), Йепреç—(46,5%), Трак—(54%) районсем пит йапăх ĕçлеççĕ.

Махоркă лартассипе кайа йулнине чăтма çук. Çак 2—3 кун хушшинче махоркăна лартса çитерес пулать.

Й. К.

Пахча-çимĕçсене сийенлекен хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешесси

Пахча-çимĕçсем лайăх ÿсчĕр тата вĕсенчен ытларах тупăш илес тесен, вĕсене аван пăхса çитĕнтермеле. Çумкурăксене пĕрмайах çумласа тăмала. Кунпа пĕрлех йарансене тата вĕсен хушшине кăпкатса, çемçетсе тăмала.

Пахча-çимĕçсене тĕрлĕрен хурт-кăпшанкăсем сийенлесе, тухăçа чакарма пултараççĕ. Çавăнпа вĕсемпе кĕрешессине те тĕрĕс организацилес пулать. Купăстана тата çарăка пахчари пăрça—пĕчĕк нăрă йевĕрлĕскер—пĕтерме пултарать. Пахчари пăрçасене пĕтерес пулсан, çур пай извĕç çăнăхĕ, тепĕр пай махоркă тусанĕ илсе хутăштарас пулать. Пĕр гектар пахча-çимĕç çине 15—30 килограм таран махоркă тусанĕ сапма йурать. Махоркă тусанĕ пулмасан наркăмăшлă-йÿçĕклĕ каçшине пĕр пай илсе икĕ пай тăпрапа хутăштарса, йе пĕр пай париж симĕсĕпе 10 пай извĕç хутăштарса сапмала. Пĕр гектар çине сапма 3—2,5 килограм париж симĕсĕ кирлĕ.

Пахчари пăрçасемпе кĕрешме çаканта кăтартнă йапаласем çук пулсан, кĕлпе те усă курма пулать. Кун пек чухне вара пахча-çимĕçсене кĕлпе, тăпра тусанĕпе, сÿнтернĕ извĕç çăнăхĕпе сапмала.

Купăста тата сухан шăнисене сулема шывĕпе çимĕçсен тунисене шăварса пĕтерме пулать. 10 литр шыв çине 8 грам сулема илсе ирĕлтермеле. Пĕр гектара сапма 2—3 килограм сулема кирлĕ. Сулема париж симĕсĕ пекех çынна сийен кÿме пултарать. Çавăнпа та унпа сыхланса ĕçлес пулать.

Купăста калчине тата ытти пахча-çимĕçсене симĕс пыйтă та пĕтерме пултарать. Çакăн пек чухне 250—300 грам супăнь 10 литр шыв çине йарса ирĕлтермеле. Пĕр гектар сапас пулсан, 15 килограм супăнь кирлĕ. Симĕс пыйтăна махоркă шывĕпе сапнипе те пĕтерме пулать.

Агроном— В. ЗАХАРĂВ.

Калчасене лайăх пăхса çитĕнтереççĕ

Йаманакри (Трак р.) „Хĕрлĕ Сормово" колхоз кăçал вăтам шутпа гектартан 120 пăт тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет. Колхоз агротехникăлă ĕçсене вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçласа пычĕ. Кăçалхи çуракинче калчасене апат панă тата мулчировани тунă.

Халь калчасем лайăх йешĕреççĕ. Ыраш шăркана ларчĕ. Çуртри калчисем çинче çумкурăксем те вăйлăн çитĕнеççĕ. Анчах, Йаманакри колхоз членĕсем вĕсене ÿсме памаççĕ. Шăтса тухнă çумкурăксене çумласах тăраççĕ.

Ăнса пулнă тырпула кĕске срукрах пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕреси—тырпулсене пуçтарса кĕме мĕнле хатĕрленнинчен нумай килет. Çакна хисепе илсе, „Хĕрлĕ Сормово" колхоз членĕсем йалхуçалăх машинисене, урапасене тата ытти хатĕрсене пурне те йусаса лартрĕç. Витнĕ итемсене йусарĕç, вĕсене кивĕ улăмçенчен тасатрĕç. Ампарсене те тасатса дезинфекцилерĕç.

Тырпулсене уйран пуçтарса кĕнĕ чух машинăсемпе кăмăн ĕçлемелине палăртса хунă. Кашни колхозник хăйĕн ĕçне тĕплĕн пĕлсе тăрать.

Н. Куçмин.

Хула тăрăх

Кирăвски посолăкра мĕншĕн ларйок çук?

Пирĕн столица — Шупашкар—çулсеренех аслăланса, саралса пырать. Акă пĕлтĕр-виçĕмçулсенче кăна Коммуналлă слобода хысĕнче Кирăв йачĕпе тăракан çĕнĕ посолăк ÿссе ларчĕ. Ку посолăк малалла саралать. Çĕнĕ урамсем шăтса тухаççĕ. Ĕçсыннисем хăйсене валли пÿртсем лартаççĕ, Шупашкарти çĕнĕ стройкăсем вырăнĕнчен йавăç çуртсене пăсса Кирăв посолăкне куçараççĕ. Çапла, кăçалхи май—ийунь уйăхĕсенче çеç çирĕме йахăн çĕнĕ пÿрт лартрĕç.

Анчах Шупашкар хула совечĕ Кирăвски посолăкра пурăнакан ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатас йенĕпе нимĕнех те туни курăнмасть-ха. Суту-илÿ ĕçнех илĕпĕр. Посолăкра ларйок çук. Çăкăр илме Коммуналлă слободана пĕр километр кайма тивет. Кунта та ларйок тесе калама май çук: 4—5 çын кĕрсен çавăрăнкалама вырăн йулмасть. Çитменнине канмали кунсенче кунĕпех хупă.

Çапла вара, посолăкри çынсен сахал йапалашăнах виçĕ километр таран хуйана утма тивет.

... Утма тивет, мĕншĕн тесен посолăка автобус çÿремест.

Ларйок уçасси çинчен иртнĕ çултах калаçаççĕ. Чебторг темшĕн васкамасть-ха.

С. К.

Фельдшер пункчĕ

ЕЛĔК. Кăçал май уйăхĕнче Вутлан йалĕнче фельдшер пункчĕ уçăлчĕ. Пункт хресчене медицинă йенчен пысăк пулăшу парать. Кунта Вутлан йалĕнчен çеç мар, сывăхри кÿршĕ йалсенчен те халăх нумай çÿрет. Йалта фельдшер пункчĕ уçнăшăн халăх хĕпĕртет.

М. В. Каменĕв.

Вулав çуртĕнче

Шаккăл (Канаш р.) суйлав участкине кĕрекен йалсоветсенче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнай Советсене суйламалли Положенисене вĕренес тĕлĕшпе 16 кружок ĕçлет. Вăл кружоксенче пурĕ 520 суйлалçă вĕренеççĕ. Халĕ кашни кружокрах 4-шер занятиь туса иртернĕ. Вăтам шкул директăрĕ Н. Изумăв йулташ ернере пĕрре агитатăрсен çеминарне туса иртерет.

Суйлав кунĕ—ийунĕн 26-мĕшĕ çывхарса килнĕ май, вулав çуртĕнче культурăлă-массăлă ĕçе аван йĕркеленĕ. Вулав çуртне суйлав çинчен çырнă плакатсемпе, лозунгсемпе илемлетнĕ. Вулав çуртĕн библиотекинче пурĕ 1133 кĕнеке. Вăл кĕнекесене тăтăшах илсе вулакансен йышĕ пысăк—300 çын. Вулав çуртне кĕнеке, хаçат-журналсем вулама колхозниксемпе йединоличниксем нумай пухăнаççĕ. Вĕсемпе вулав çуртĕн пуçлăхĕ Кошкин йулташ калаçусем туса иртерет, суйлав Положенисене ăнлантарса парать, агитатăрсене ĕçре пулăшса пырать.

А. Кириллăв.

С у д

Ача вĕлерекенсем

1926 çулта Тĕрень йалĕнчи (Трак р.) Игнати Ионăв Кальуков бандит ушкăнĕпе çыхăнса вăрăхурах ĕçĕсем тунишĕн айăпланса тĕрмере ларнă. Çав вăхăтра унăн арăмĕ ача çуратнă. Ионăв тĕрмерен таврăнсан, хăйĕнчен мар пулнă ачана Федăра килĕштермен.

1936 çулта Федăрăн амăшĕ вилет. Çакăн хыççăн вара Федăрăн пурнăçĕ чăтма çук начарланса кайать, ăна тăраниччен çитермеççĕ, çĕтĕк-çатăк çÿретеççĕ. Ионăвăн малтанхи арăмĕнчен çуралнă хĕрĕ Марийа та Федăра кураймасть, ăна час-часах хытă хĕнет.

1938 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче, çĕрле, вунă çулхи Федăра Ионăвпа унăн хĕрĕ Марийа пăвса вĕлереççĕ. Тискер ĕçе пытарас тесе вĕлернĕ ачана майĕнчен пăйавпа çыхса кĕлет кĕтессине тайăнтарса тăратаççĕ.

Ийунĕн 12-мĕшĕнче Трак районĕнчи халăх сучĕ çак ĕçе пăхса тухса Ионăвпа унăн хĕрне Марийана, РСФСР Угловлă Кодексĕн 136-мĕш статйи тăрăх айăпласа, иккĕшне те 9 çул хушши хупса усрамала турĕ.

К. Михайлăвă.
Ф. Николайĕв.

Пулни-иртнисем

ВĂРА ТЫТНĂ. Пушкăртри (Тутаркас р.) туллимар вăтам шкулти учителница Йелизавета Йеремейĕва ийунĕн 9-мĕшĕнче Сĕнтĕре учителсен канашлăвне кайсан, çав йалти Иван Йакăвлĕв унăнне пин тенке йахăн тĕрлĕ йапаласем вăрласа тухнă. Йакăвлĕва ийунĕн 13-мĕшĕнче тытнă. Ĕçе тĕрĕслеççĕ.

М. Горькин малтанхи революцилĕ публицистики

(ЙУЛАШКИ)

та вăл халăх çĕнтернипе вĕçленĕ...

Влаç халăх аллине лексен, ăна Романăвсен таврашне ирĕке хирĕç, тивĕçлĕхе хирĕç, чăнлăха хирĕç, хăйсен влаçĕшĕн, унăн тискер, культурăна хирĕçле йăлисем Йевропăн пĕтĕм тÿрĕ чĕрисемпе куçĕсене паллă пулса тăракан влаçĕшĕн кĕрешме пулăшнă Франци банкирĕсем çинчен астутарĕç.

Вырăс халăхĕ франци банкирĕсене унччĕнех хăйĕн йунĕпе тÿлесе татнă займсене тавăрса памассине лайăх ĕненетĕп епĕ. Тавăрмасть ăна".

„Заметки о мещанстве" статйа та кăмăла хумхантарать.

Пĕрремĕш революци кĕрлесе иртрĕ çеç, реакци çулĕсем пуçланчĕç. Тирансемпе хысна укçине çаратакансен самодержавилĕ бюрократисăмлă стройĕн хăйĕн вилĕм кунне чăсма май пулчĕ. Вĕсем кăна, хăйсен вăйĕне, хăйсен ăсĕпе те мар, мещенсем пулăшнипе, „пурнăçшăн кĕрешессинче хăйсене ÿрĕк-сÿрĕк тытакан" çынсен нумай мелйунлă сийĕ пулăшнипе çеç çапла тума пултарчĕç".

Аслă писатĕл мещенсен чунне çав тери лайăх уçса кăтартать. Вăл „хăйĕн ăшĕнче те, тулашĕнче те лăпкăлăх" тăвасшăн çунакансене никама та — Толстойа та, „чăтма", „усалпа килĕшме" чĕнекен Достойевскийе те, тата ыттисене те шелленмен. „Пурнăçра тăшманла вăйсен тытăçăвĕ ÿссе пыма пуçласан, мещенсем хăйсен пуçĕсене мĕнле те пулин килĕшÿ теорийĕн çуначĕ айне васкавлăн пытараççĕ",—тет вăл.

Çакă хавхаланулă та хайар статйара чăн-чăн суйа чейе тата ирсĕр сăн-сăпата — мещенсен сăн-сăпатне, опортуниссен сăн-сăпатне, пĕр-пĕринпе нихăçан та килĕшме пултарайман лагĕрсем: рабочисемпе вĕсене пусмăрласа пурăнакансем хушшинче чупкаласа çÿрекен суйа социалиссен сăн-сăпатне уçса панă.

„Çакă икĕ вăй хушшинче мещенсем çухалса кайса çапкаланаççĕ,—вĕсем килĕшме май çуккине кураççĕ; вĕсене сылтăма кайма намăс, сулахайа кайма — хăрушă, вĕсем тĕрткелешсе тăракан вырăнта тăварланнă çемĕн тăварланса пырать, тăшмансем пĕр-пĕрин патне çывхарсах пыраççĕ, кĕç-вĕç çапăçу пуçланас пек тăрать..."

Çакă хайар та кăмăллă статйа реакци урнă çулсенче массăна революци йенне туртса илес тĕлĕшпе калама çук пысăк вырăн йышăнни çинчен нимĕн те иккĕленмели çук. Вăл хăйĕн хакне пайан кун та çухатман.

Макçим Горькин малтанхи революцилĕ публицистикин кĕнеки вăл халăхăн вăйлă тусĕ, пролетарилĕ революцишĕн вăйлă кĕрешекен паттăр пулнине тепĕр хут çирĕплетсе парать. Тăшмансем унăн умĕнче, революцилĕ сăмахăн улăпĕ умĕнче вăрттăн çеç пăшăлтатнă. Тăшмансем унăн хăватлă вăйне туйса илнĕ, çавăнпа та революцин аслă писателне тискеррĕн вĕлерне.

Мещен-тăшмана кураймасăр, чĕререн ылханса Горький хăйĕн „Заметки о мещанстве" йатлă статйине çакăн пек пророкла сăмахсемпе вĕçленĕ:

„Мĕскĕн чун, вăл çав тери сийенлĕ мар пулсан, ун çинчен çырма та кирлĕ марччĕ, анчах вăл темле ирсĕр пулсан та, ун çинчен пуринчен те ытларах калаçмала...

Пирĕн кунсем кĕрешÿ кунĕсем çеç мар, суд кунĕсем те; пирĕн кунсем чăнлăхшăн, ирĕклĕхшĕн тата чыслăхшăн кĕрешекенсене пурне те вăйлисен дружинине пĕрлештерессин кунĕсем çеç мар, халь анчах пролетариат çарĕн тылĕнче пынисенчен уйăрса илессин кунĕсем те пулса тăраççĕ..."

Государствăн политикăлă литературă издателстви кăларакан кĕнеке совет вулакансемшĕн пысăк парне пулать.

Вырăнти пуйанлăхсемпе усă курассишĕн

Орденлă Чăваш республикин промышленнăçĕ хăвăрт ÿснĕ май, хальхи вăхăтра ĕçлекен тата пулас предприйатисене валли хутмали парса тăрас ыйту çивĕччĕн тухса тăрать. Ку ыйтăва чи малтанах Шупашкарти промышленнăç узелĕнче татса памала пулать.

Çывăхри вăрмансен пысăкрах пайне касмала мар пирки, хальхи вăхăтра Шупашкарти промышленнăç узелĕ хутма çитменнипе аптăрать. Хутмали Атăл тăрăх çулти вăрмансенчен кÿрсе килме лекет.

Чăваш республикинче хутмали ку таранччен вăрман йавăçĕ пулса тăнă.

Хамăр республикăрах пур вырăнти хутмали йапаласемпе (торф тата çунакан сланĕц халиччен çителĕклĕ усă курмастпăр-ха.

Пирĕн республикă торфпа пуйан. Атăлăн сулахай йенче, Шупашкартан 5—6 километртра, „Дрянное" тата „Долгое" текен шурлăхсенче торф питĕ нумай выртать.

Чăвашсен ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ тĕпченĕ тăрăх тата ССРС Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи торф институчĕ çирĕплетнĕ тăрăх, асăннă шурлăхсенче çакăн чухлĕ торф пур:

„Дрянное" текен шурлăхра 36.322 мĕлйун кубла метр, „Долгое" текен шурлăхра 1.987 мĕлйун кубла метр торф запасĕ выртать. Малалахи вăхăтра торфпа уйрăмăнах усă куракан предприйатисем Шупашкарти тата Иванăвăри кирпĕч савăчĕсем пулаççĕ.

Çитес çывăх вăхăтра Вăрманкасси (Шупашкар р.) йалĕ çывăхĕче лартма палăртнă çулталăкне 400 мĕлйун штук кирпĕч туса кăларакан савăт та торфпа ĕçлемеле пулать.

РСФСР Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕ торфпа усă курас тĕлĕшпе хатĕрленÿ ĕçĕсене туса иртерме ЧАССР Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариатне 455 пин тенкĕ укçа уйăрса панă.

РСФСР Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕ йышăннă тăрăх, çак çулхи октаберĕн 1-мĕшĕ тĕлне тĕрĕслев ĕçне туса пĕтермеле, 1940 çулта торфпа усă куракан предприйатисене туса çитерсе ĕçе йамала.

Руденко.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 299

[illegible] Чăвашпалиграфтрест, Заказ № 560.